Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

● 2024 çул ●

Чӳк (Ноябрь), 8

●ЭРНЕКУН●

43/10733/№

Хакĕ ирĕклĕ



## Тăвай округĕнчи шалти ĕçсен органĕсен хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

### Сире ноябрĕн 10-мĕшĕнчи професси уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Эсир обществăри йĕркелĕх хуралĕнче хăвăр тивĕçĕре чыслăн пурнăçлатăр. Ытти ведомствăсемпе тачă хутшăнса, пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлесе округ территорийĕнче лăпкă лару-тăру тăвассишĕн тăрăшатăр. Сирĕн ăсталăхăрпа пысăк чăтăмлăх, хăюлăх преступлени тăвассине хирĕç ăнăçлă кĕрешме, çынсене вăхăтра пулăшма май параççĕ.

Право йĕркине сыхлассипе хăвăрăн служба тивĕçĕсене яваплăн та тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынăшăн тав тăватăп. Сире çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, ăнăçу, мĕнпур лайăххи сунатăп!

**Олег ЛОМОНОСОВ,**
**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ**

## Чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче – Пĕрлехи информаци кунĕ

**Пĕрлехи информаци кунĕнче çак темăсене пăхса тухаççĕ:**

1. Пуçарулăх бюджечĕпе килĕшӳллĕн проектсене пурнăçа кĕртсе пыни çинчен.
2. Чăваш Республикин территорийĕнче Пĕтĕм Раççейри физкультурăпа спорт комплексĕн ГТО нормативĕсене пурнăçласа пыни çинчен.
3. Чăваш Республикинче вак тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене патшалăх пулăшăвĕ пани çинчен.

Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕнче 12.00–13.00 сехетсенче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнаççĕ. 2-12-15 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

**Ирина МИХАЙЛОВА,**
**округ администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ**

## Ял аталанăвне пĕрлехи вăйпа

**«Хĕрарăмсем – ял малашлăхĕшĕн» ятпа Тăвай округĕнче çамрăксен форумĕ иртнĕ. Чăваш Енри хĕрарăмсен Союзĕн грант конкурсĕн шайĕнче (унта Тăвайри хĕрарăмсен уйрăмĕ хутшăнса мала тухнăччĕ) йĕркеленĕ ăна. Муниципалитет çамрăкĕсем ялсен территорийĕсене аталантармалли малашлăхра хĕрарăмсен пысăк пĕлтерĕшне сӳтсе явнă.**

Округри маттур та пуçаруллă хĕрсем ял пурнăçĕн пахалăхне лайăхлатма çамрăксене явăçтарассипе çыхăннă хăйсен проекчĕсемпе паллаштарнă.

Форума хутшăннă хĕрарăмсен умĕнче республикăри «Пĕлӳ обществăн лекторĕсем тухса калаçнă, лекцийĕсене карьерăна аталантарма пулăшакан сĕнӳсемпе, финанс пĕлĕвĕпе, патриотла воспитани парас ыйтусемпе çыхăнтарнă. Секциллĕ занятисемпе ăсталăх класĕсенче наци сувенирĕсем тума, сэндвичсемпе глинтвей хатĕрлеме, макияж тума тата ытти пултарулăха вĕреннĕ.

Форум вăхăтĕнче Тăвайри культура çурчĕн фойинче «Хĕрарăм аллин асамлăхĕ» ятпа декорацие прикладнăй ĕçсен куравĕ йĕркеленĕ.

**Светлана НИКОЛАЕВА**

## Оркестр – пирĕн мăнаçлăх

**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов ача-пăча искусство шкулĕн преподавательне Илья Иванович Совина черетлĕ наградăпа саламланă. Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Чăваш Республикин вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ. Вăл ертсе пыракан Тăвайри вĕрсе каламалли оркестр чăннипех те пирĕн мăнаçлăх.**

Пĕлӳ çурчĕсенче унти музыкантсем Раççей тата Чăваш Ен гимнĕсене вылянипе вĕренӳ занятийĕсем пуçланаççĕ. Пĕр патриотла мероприяти те, ĕç чыславĕн саманчĕ те оркестр хутшăнмасăр иртмест. Çапла общество пурнăçне хăйсен сулмаклă тӳпине хываççĕ унăн вĕренекенĕсем.

И.И.Совин 56 çул çамрăксен пултарулăхне аталантарас ĕçре, çак хушăра музыкантсен темиçе ăрăвне вĕрентсе кăларнă. Паян та «Вĕренӳ» наци проекчĕн «Кашни ачан ăнăçлăхĕ» проекта пурнăçа кĕртме вăй-халне шеллемесĕр хутшăнать.

**Раиса ВАСИЛЬЕВА**



## Юлия Ивановна 101 çул тултарнă

**Тĕмер ялĕнче пурăнакан Юлия Ивановна Чумышева – Тăвай тăрăхĕнче çулĕпе чи сумлă ĕç ветеранĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен сăмах хускатсан хăй, 18 çулхи хĕр, окопсем чавнă çĕрте ĕçленине, тăванĕсене фронтра вăхăтсăр çухатнине аса илет. Вăрманхĕрри хĕрĕ вăрçă участникĕпе, Хĕрлĕ Çăлтăр орден кавалерĕпе Александр Егорович Чумышевпа çемье çавăрса шăкăл-шăкăл пурăннă. 3 ача пăхса ӳстернĕ, аслă пĕлӳ илме пулăшнă.**

Паян 7 мăнукпа, 7 кĕçĕн мăнукĕпе хавхаланса пурăнать. Хăйĕн çураллă кунĕ умĕн акă вĕсенчен пĕри – Владислав Анатольевич «Чăваш Республикин промышленноçăн хисеплĕ ĕçченĕ» ята тивĕçсе асламăшне пысăк савăнăç кӳчĕ. Юлия Ивановнапа мăшăрĕ Александр Егорович ĕçлĕ кун-çулне библиотека ĕçĕпе çыхăнтарнă. «Чăваш Енри чи лайăх вулавăш» ята çĕнсе илнĕ. Салтак арăмĕ халĕ те кĕнекепе туслă. Илемлĕ литературăсăр пуçне кĕлĕсем вулать. «Ял ĕçченĕ» хаçатпа кăмăлтан паллашать, телевизор пăхать, Чăваш наци радиовĕн передачисене итлет.

Сумлă тылпа ĕç ветеранне Тăвай округĕн пуçлăхĕн çумĕ Ирина Михайлова, Тĕмер территори уйрăмĕн администрацийĕн ĕçченĕсем Геннадий Ивановпа Светлана Ярхунова, ялти вăтам шкул директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Роза Якуркина, ĕçпе вăрçă ветеранĕсен районти совечĕн председателĕ Римма Гурина саламланă, парнесемпе чĕрĕ чечексем панă.

Юлия Ивановнан награда нумай. Медальсем те вуннăран ытла. Римма Антоновна Сăрпа Хусан хӳтĕлев сооруженийĕсем тума хутшăннă ĕç паттăрне республикăри ветерансен организацийĕн медальне парса чысланă.

**Раиса ШУМОВА**



## «Ку пирĕн пĕрлехи награда...»

**Тăвайри социаллă пулăшу паракан центра пурлăхпа тивĕçтерекен 1682-мĕш уйрăм батальон командирĕнчен Наталия Юрьевна Федорова ячĕпе Тав çырăвĕ килнĕ. «Сире ыр кăмăллăх пулăшăвĕшĕн, гражданла хастар позицишĕн тав тăватпăр. Эпир пĕрле тăрăшсан çĕнтерĕве çывхартатпăрах!»– тенĕ унта.**

«Ку наградăра ыр кăмăллăх ĕçне хутшăнакансен тӳпи пысăк. Вĕсене тав сăмахĕ калатăп. Эпир тăвакан ырă ĕçе курни, хаклани татах та хавхалантарать»,– тенĕ вăл чыслав самантĕнче.

Н.Ю.Федорова каланă тăрăх, паян Тăвай округĕнче СВОри салтаксем валли маскировка сетки çыхакан 10 ытла пункт ĕçлет. 200 ытла кĕмĕл волонтер çак ĕçе тата окоп çурти тума, гуманитари пулăшăвĕ пухма хутшăнать.

**Валентина АЛЕКСАНДРОВА**




## ÇЫРĂНТАРУ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ

**Тăвай тăрăхĕн хаçачĕ, пирĕн юратнă «Ял ĕçченĕ», 1935 çулхи нарăс уйăхĕнче тухма тытăннă та пирĕн округ историне, кун-çулне тĕпĕ-йĕрĕпе палăртса, тĕпчесе пырать. Хамăр тăрăх мĕнпе пурăннине, сывланине, кунти çĕнĕлĕхсене тата кунти тĕп пулăмсене пуринчен малтан пĕлтерсе тăрать паянхи кун та.**

**Ниĕнле хаçат та вулакансăр пулмасть, пирĕн ентешсем вара ку енчен уйрăмах хастар иккенне палăртас килет. Эсир ăсатакан çырусем, сирĕн сĕнӳсемпе канашсем пирĕн юратнă хаçата тата чĕрĕрех, хитререх тата пуянрах тăваççĕ. Хыпар ярсах тăрăр, эпир ялан хапăл. Тăвай тăрăхĕнчи кашни килтех «Ял ĕçченĕ» хаçат пулмаллах, çавăнпа эпир сире çырăнтару малалла пынине аса илтеретпĕр. 2025 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн альтернативлă майпа çырăнмалли хак – 360 тенкĕ, почта урлă – 675 тенкĕ те 96 пус.**

ЗДРАВООХРАНЕНИЕ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

# ФАПа çӳреççӗ

**Çынсене хăйсем пурăнакан вырăнта паха медицина пулăшăвĕпе тивĕçтермелли çинчен Раççей Президенчĕ Владимир Путин тăтăшах аса илтерсе тăрать. «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕ çакна пурнăçа кĕртсе пыма пулăшать. Çапла майпа Тăвай округĕнче те кивелнĕ çуртсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсем çĕннисене куçса пыраççĕ, сывлăх сыхлавĕн пуçламăш сыпăкне кадрсемпе тивĕçтересси те ырă еннелле улшăнать. Асăннă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн юлашки çулсенче округри чылай ялта ФАПсем çĕнĕ çуртсене куçнă.**

Виçĕмçул Тушкилте врач амбулаторийĕ хута кайнă, пĕлтĕр Тĕмертине тĕпрен юсаса çĕнетнĕ. Кăçал вара Тăрмăшри врач амбулаторийĕ, Кармалти фельдшерпа акушер пункчĕ çĕнĕ çуртсене кĕнĕ. Çывăх çулсенче Мучартипе Пуянкасси ялĕсенчи ФАПсене те çĕнетес тĕллев тăрать. Çурчĕсемпе пĕрле, паллах, вĕсенчи оборудовани те çĕнелет, условисем лайăхланаççĕ, хăтлăх ӳсет.

Кадрсен ыйтăвне татса пама вара 2012 çултанпа ĕçлекен «Земство тухтăрĕ» тата 2018 çултанпа вăйра тăракан «Земство фельдшерĕ» программăсем витĕм кӳреççĕ. Асăннă программăсем пулăшнипе пирĕн округа та врачсемпе фельдшерсем килнĕ. Чăн та, ĕçлемелли пилĕк çуллăх срока татнă хыççăн тухтăрсенчен чылайăшĕ ытти çĕре кайнă. Виçĕ фельдшер килнĕ ялсене программăпа килĕшӳллĕн, вĕсем ĕçлеççĕ, çынсене медицина пулăшăвĕпе тивĕçтереççĕ. Кăçал Кивĕ Пуянкасси ялĕнче те Канашри медицина колледжĕнче вĕренсе пĕлӳ илнĕ Марина Юрьевна Моисеева ĕçлеме пуçларĕ. Нумай çул тăрăшнă Рина Васильевна Ильина фельдшерица тивĕçлĕ канăва кайнă хыççăн кунта ваканси уçăлнă. Ятарлă специалист çийĕнчех тупăнманнипе кунти ФАПри ĕçсене эрнере икĕ кун Çĕнĕ Пуянкассинчи Любовь Павловна Гурьева пурнăçласа пынă. Халĕ ĕнтĕ августранпа пациентсене Марина Юрьевна йышăнать. Энĕшпуç хĕрĕ, Тăрмăша качча тухнăскер, хăйне пациентсемпе питĕ кăмăллă тытать, таравать, вĕсене май килнĕ таран пулăшма тăрăшать. «Грипран прививка тутартăм»,– терĕ, сăмахран, ФАПран инçе те мар пурăнакан Роза Николаевна Иванова. Вăл кӳршипе пĕрле пынă фельдшерпа акушер пунктне. Хăшĕсем укола çӳреççĕ кунта, юн пусăмне тĕрĕслеттерекенсем те пур. Тепри-тепри хăйне пăшăрхантаракан ыйтупа та канашлама пырать пĕр-пĕр чир пирки. Пурне те хапăл фельдшерица, пурне те тивĕçтерме тăрăшать. Планпа пăхнă ĕçсене те пурнăçлать. «Фельдшерпа акушер пунктĕнчех эмел сутсан та лайăх пулмалла»,– тет хăшĕ-пĕри. Выранти пуçламăш медицина пулăшăвне шанаççĕ ялта пурăнакансем.

**Иван ГЛАДКОВ**

АПК АТАЛАНĂВĔ

# Аграрисем валли – çĕнĕ йĕркесем

**Кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа федераци патшалăх инспекцийĕн программи вăя кĕнĕренпе вăрлăх туса илессипе тата ăна сутассипе ĕçлекен, вăрлăх туянас текен ял хуçалăх организацийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсем çĕнĕ йĕркепе пăхăнса ĕçлеме тытăнчĕç.**

Тухăçлă тыр-пул çитĕнтерессинче паха вăрлăхпа усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку чухне ял хуçалăх предприятисемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсен çак программăра (электронлă майпа алă пусни, хăйсен уççи (ключ) регистрациленмелле.

Малтанхи вăхăтра туса илнĕ вăрлăха сутнă е туяннă чухне инспекцире протокол çырнипех çырлахнă пулсан, халĕ вăрлăха хатĕрлесе уйăрнă хыççăн çак программа урлă Россельхозцентра заявка тăратмалла. Эпир, Россельхозцентр ĕçченĕсем, вăрлăха анализ илсе тĕрĕсленĕ хыççăн унăн пахалăхне мĕнле хакланине çак программăна кĕртетпĕр. Малтанхи пек протокол çырмалли те пулмасть, ăна пĕтĕмпех электронлă майпа ĕçе кĕртеççĕ.

Вăрлăх туса илекен, ăна сутакан тата туянакан ял хуçалăх организацийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсен çак программăра регистрациленмесĕр малашне ĕç малалла каймĕ. Мĕншĕн тесен çакна тумасан вĕсем вăрлăх туса илнĕшĕн патшалăхран уйăракан субсидисене те тивĕçеймĕç, вăрлăха, çавăн пекех туса илнĕ тыр-пула та ниçта, никама сутаймĕç. Пахалăха тивĕçтерекен сертификата илме те çак программа витĕр тухмалла.

**Татьяна СОВИНА, «Раççей ял хуçалăх центрĕн» Чăваш Енри филиалĕн округри уйрăмĕн агрономĕ**

ЦИФРОВАЯ ЭКОНОМИКА
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

# Шкулти цифра пĕлӳлĕхĕ

**Ку чухнехи пурнăç цифра технологийĕсем витĕм кӳнипе хăвăрт аталанать. Цифра пĕлӳлĕхĕ çĕнелсе, улшăнса пыракан пурнăçпа тан утмалли хăрушсăр «трамплин» пулса тăрать. Шкулсенче вĕренекенсем уроксенче тата хушма занятисенче информаци технологийĕсемпе усă курмалли правилăсемпе тата требованисемпе паллашаççĕ.**

Ноябрĕн 5-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче VK «Приложенисен магазинĕ» темăпа Пĕтĕм Раççейри «Цифра урокĕ» пĕлӳлĕх проекчĕн çĕнĕ тапхăрне пурнăçа кĕртет. Шкул ачисем Раççейри RuStore приложенийĕсен магазинĕн тĕслĕхĕпе цифра проекчĕсем тумалли тата тытса пымалли процеса вĕренеççĕ, IT-сервиса проектламалли тата малалла ĕçе ямалли усăллă опытпа паллашаççĕ. Проекта «Цифра экономики» АНО Раççей Цифра министерствипе тата Раççей çутĕç министерствипе пĕрле «Цифра экономики валли кадрсем хатĕрлесси» федераци проектне тĕревлесе çулленех пурнăçа кĕртсе пырать.

Эллуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта вĕренекенсем «Цифра урокне» активлă хутшăнаççĕ, унта приложенисен магазинĕн технологийĕсемпе тăрăшсах паллашаççĕ. Урок вăхăтĕнче вĕренекенсем харпăр хăйĕн приложенисен магазинĕн «хуçи» пулса тăма та тытăнса пăхнă, цифра продукчĕсем туса хатĕрлемелли тата вĕсене çĕнетсе пымалли никĕссене вĕреннĕ тата ытти те. Интерактивлă тренажерсене пула вĕренекенсем хăйсене программăпа тивĕçтерессине саракан сервиссем йĕркелекен тата вĕсене аталантаракан IT-специалистсем пек те пулнă.

Цифра пĕлӳлĕхĕ пĕлӳсен анлăшĕнчи парăс та, хӳтлĕх хатĕрĕ те пулса тăрать.

**Алевтина ЯРЦЕВА, математикăпа информаци учителĕ**

# Пĕр-пĕрне хисеплесе, хавхаланса пурăнсан

**Ямпулатри Жуковскисен çемйи – хисеплисенчен пĕри. Кил хуçи Иван Владимирович çак кунсенче 87 çул тултарчĕ. Лидия Григорьевнапа пурнăç çулĕпе пĕрле утма пуçланăранпа кĕçех 60 çул çитет. Мăшăрĕ ялти больницăра тăрăшнă. 3 ача пăхса ӳстерсе, тĕрĕс воспитани парса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Икĕ хĕрĕ те амăшĕ пекех кун-çулне медицинăпа çыхăнтарнă. Ывăлĕ Чăваш патшалăх университетĕнче строителе вĕреннĕ. 6 мăнукпа 3 кĕçĕн мăнукĕ савăнтараççĕ ватăсене. Яла килсе пулăшсах тăраççĕ пурте.**




Иван Владимирович ачаранах колхозра ĕçлесе пиçĕхнĕ. Нумай çул шоферта вăй хунă. Тăрăшулăхне кура каярах автопаркра снабженеца лартнă. Шанăçа тӳрре кăларса пынă вăл. Нумай мухтав грамоти ĕç ветеранĕн, çакă ĕнтĕ тӳрĕ кăмăлпа ĕçленин хаклавĕ.

Эпĕ больницăра аслă медсестрара ĕçленĕ вăхăтра профком председателĕ пулнă. Ун чухне те ĕç ветеранĕсене чыслассине ырă йăлараччĕ. Халĕ те тытса пыратпăр çавна. Людмила Владимировна Степанова та пулчĕ пĕрле. Вăл кил хуçин йăмăкĕ, санитаркăра вăй хунă. Тăрăшуллă та савăк кăмăллă мăшăра çирĕп сывлăх, татах та нумай çул пурăнма иксĕлми вăй-хал сунтăмăр. Ĕç ветеранĕсене саламлама пӳрт тулли хăна пуçтарăнчĕ. Ачисен çемйисемсĕр пуçне кунтах кӳршисем, юлташĕсем, тăванĕсем... Çĕнĕ Шупашкарта культура тытăмĕнче тăрăшакан Регина Борисова кукашшĕн юратнă юррисене шăрантарчĕ. Эпир те хăнасемпе пĕрле юрларăмăр. Кил хуçисен йăмăкĕсем Людмила Владимировнапа Ангелина Григорьевна ĕлĕк хорта юрланă юрăсене парнелерĕç. «Вĕç, вĕç куккук», «Сукмак», «Ăçта каян чĕкеç?» тата ытти те илемлĕн шăранчĕ.

Иван Владимировичпа Лидия Григорьевна пире чунтан тав турĕç. Çапла пĕр-пĕрне хисеплесе, хавхаланса пурăнсан ĕмĕрĕ те тăсăлать.

Пăхатăн та çак килĕшӳллĕ мăшăр çине, мĕн чухлĕ çепĕçлĕх, ыр кăмăллăх вĕсен чун-чĕрисенче.

**Фрида НИКИТИНА, Тушкил ялĕ**

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

**Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç отраслĕпе кĕскен**

• Кăçал Чăваш Енре 783 пин тонна ытла, çав шутра Тăвай округĕ-пе 28,9 пин тонна, е республикипе иртнĕ вунă çулхи вăтам кăтартуран 7,5 процент нумайрах тĕш тырă пухса кĕртнĕ. Çу юхтармалли культурăсен лаптăкĕ 37,5 процент пысăкланнă.

• Чăваш Ен Атăлçи тăрăхĕнчи вун тăватă регион хушшинче çĕрулмипе хăмла производствин калăпăшĕпе – пĕрремĕш, сĕтпе тата пахчаçимĕçпе – иккĕмĕш, тырăпа тата аш-какайпа виççĕмĕшпе тăваттăмĕш, мĕнпур продукци калăпăшĕпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнать. Кашни 100 гектар çĕр пуçне ял хуçалăх продукцийĕ туса илессипе республика кăçал та малти вырăнсенче.

• Ял хуçалăх продукцийĕнчен апат-çимĕç хатĕрлекен предприятисем кăçалхи 9 уйăхра иртнĕ çулхинчен 25 процент ытларах продукци туса кăларнă. Ăна хамăр çĕршывра çеç мар, чикĕ тулашĕнчи 40 патшалăха сутаççĕ.

• Производствăна ӳстерсе пыма патшалăх та хăй енчен самай пулăшать. Кăçал тĕрлĕ категорири хуçалăхсене субсидипе грант пама 5 миллиарда яхăн тенкĕ уйăрнă. Чăваш Ен федерацин Атăлçи округĕнче кашни гектар пуçне 6,1 пин тенкĕ уйăрса пĕрремĕш вырăнта тăрать.

• «Пуçарулла бюджет» программăпа пăхнă укçапа 2024 çулта 568 автоçула, социаллă сферăн 105, коммуналлă хуçалăхăн 257, пушар хăрушсăрлăхĕн 7 объектне, 141 территорие юсаса лайăхлатаççĕ, çынсем йышлăн канмалли 96, ача-пăчан 69 лапамне тăваççĕ, 62 пĕвепе кӳлле юшкăнран тасатаççĕ, пурĕ 1487 проекта, çав шутра Тăвай муниципалитет округĕнче 115 проекта пурнăçлаççĕ.

• Республика халăхĕн 35,6 процентĕ е 416,3 пин çын ялсемпе поселоксенче пурăнать. ЧР Пуçлăхĕн хушăвне пурнăçласа халăха, çамрăксене аграри пĕлĕвĕ памашкăн ача сачĕсенче 130 агролаборатори ĕçлет, кашни округрах агроклассенче, ял хуçалăхĕн 5 техникумĕнче пĕлӳ илеççĕ, республикăри аграри университечĕ çуллен ытларах та ытларах специалист вĕрентсе хатĕрлет, «Фермер шкулĕ» те пĕлӳ парать.

• Отрасле çитес 5 çулта аталантармалли программа хатĕрленĕ. «Агроутăм» («Агропродвижение») проекта пурнăçласа ял хуçалăх чĕртаварĕн производствине 25 процент, экспорта 1,5 хут ӳстермелле.

• Чи лайăх экономика кăтартăвĕсемпе палăрнă округсене укçан преми параççĕ. Мĕн чухлĕ ял хуçалăх çĕрĕпе усă курнине пăхса красноармейскисем, Шупашкар округĕ тата муркашсем мала тухнă.

• Ял хуçалăх организацийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсене те палăртнă. Хресчен-фермер хуçалăхĕсем хушшинчи чи лайăх производствăпа экономика кăтартăвĕсемшĕн Тăвай округĕнчи Сергей Илларионовăн хуçалăхĕ иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ. Кунта кăçал сĕт туса илесси кăна 121 процент е умĕнхи çулхи 9 уйăхринчен 530 тонна хушăннă, кашни ĕнерен вăтамран 6940 килограмм суса илнĕ, ку вăл округри чи пысăк кăтарту.

**Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

# МАНĂН ÇЕМЬЕ – МАНĂН ПУЯНЛĂХ

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçланать

## Лавккасем те тытаççĕ, вĕрентекен те пур

**– Çемье сывă обществăпа хăватлă патшалăх йĕркелемелли никĕс шутланать. Çемье – ĕмĕрхи хаклă тупра, вăл ăс-хакăлпа культура йăлисене упрать, ăрусене пĕрлештерет,– тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.**

**Нумай çул çемьеллĕ пурăнакан мăшăрсем юратупа шанчăклăх тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ. Пĕрле нумай çул пурăнни пысăк çитĕнӳ кăна мар, çемье телейĕн çирĕп никĕсĕ те. Çавăн пек мăшăрсем чăн-чăн юрату пуррине çирĕплетеççĕ.**

### Иккĕшĕ те вăрçă ачисем



Эпир паян Çĕнçырма ялĕнче пурăнакан Васильевсен – Анатолий Васильевичпа Таисия Васильевнан пĕрлехи кун-çулĕ çинчен сăмах пуçарасшăн. Вĕсем ялта хисеплĕ те сумлă мăшăр, иккĕшĕ те педагогика ĕçĕн ветеранĕсем тата вăрçă ачисем. Аслă вăрçă вĕçленнĕренпе кĕçех 80 çул çитет, анчах унăн арăмĕ паянхи кунччен пирĕн чĕресенче. Вăрçă ветеранĕсем Элпуç тăрăхĕнче никамах та юлмарĕ, вăрçă ачисем те шутлă çеç пурăнаççĕ. Васильевсем – вĕсенчен пĕрисем. Анатолий Васильевичпа Таисия Васильевна çемье çавăрнăранпа 62 çул çитрĕ. Çамрăклăхри туслăхран вăй илнĕ юрату вĕсене пурнăçăн анлă çулĕпе паян кун та туслăн юнашар утма пулăшать, вăй-хал парса тăрать, пĕр-пĕриншĕн çирĕп тĕрев пулса тăма май парать. Вĕсем хăйсен тĕслĕхĕпе çамрăксене туслă та çирĕп çемье чăмăртама вĕрентеççĕ.

Вăхăт тени вара шав малалла шăвать. Анатолий Васильевич та акă ялти чи ватă çын пулса тăчĕ. Вăл 1936 çулхи декабрь уйăхĕнче Çĕнçырма ялĕнче çуралнă, унăн анлăшĕнче ӳссе тĕрекленнĕ. Ашшĕ, Василий Касьянович Касьянов, 1915 çулхи пулнă, чукун çул çинче ĕçленĕ. Амăшĕ, Парасковья Тимофеева, 1913 çулхи, вăл колхозра вăй хунă.

Шел, Анатолий ашшĕне вуçех астумасть. Малтан çар службинче пулнă, унтан, нимĕç фашисчĕсем Тăван çĕршыв çине тапăнсан, 1941 çулта тӳрех вăрçа кĕнĕ те, киле текех килеймен те. Йывăр пулнă ачалăх. Амăшĕ çак асаплă вăхăтра ачисемшĕн те хыпса çуннă, колхоз ĕçне те хутшăннă. Питĕ хĕнлĕ пулнă ĕнтĕ ăна, çитменнине, чире пула 37 çултах пурнăçран уйрăлнă. Вун тăватă çулхи Анатолие тата унран тăватă çул кĕçĕнрех йăмăкне асламăшĕ Агафия Михайловна тата аслашшĕ Касьян Павлович Павловсем пăхнă. Вĕсем иккĕшĕ те Вăрмарти сĕтел-пукан фабрикинче ĕçленĕ. Ачасем те, паллах, алă усса ларман, вĕсем те ырми-канми ĕçленĕ. Ытларах сертепе пултăран яшки çисе, пахчаçимĕçпе сыпăнтаркаласа пурăннă пулсан та – тӳснĕ.

### Пурнăçăн анлă çулĕпе

Анатолий Элпуçĕнче 7 класс пĕтерсен Кĕçĕн Кипече вĕренме кайнă. Кăна пĕр хăй çеç пĕлет, вăрман витĕр епле çӳренине. Çамрăкăн ырăн тăхăнмалли те пулман. Çапах та чăтнă, шкулта тăрăшса вĕреннĕ вăл. Асапланса çӳрени харама кайман, вунă класс хыççăн Улатăра çул тытнă çамрăк, вăрман техникум училищине вĕренме кĕнĕ. Ăна пĕтерсен Кострома облаçне направленипе ĕçлеме яраççĕ. Унтанах хĕсмете тăнă. Çар службинче виçĕ çул пулнă хыççăн тăван килне таврăнать.

Анатолий малалла вĕренес шухăшпах хĕмленет, учитель пулас ĕмĕтпе 1960-мĕш çулта Канашри педагогика училищине кайса кĕрет. Унта пĕлӳ илнĕ хушăрах Шупашкарти педуниверситетра та заочно йĕркепе вĕренме тытăнать. Тарăн пĕлӳллĕ специалист пулма хатĕрлет хăйне çамрăк. Кĕçех Элпуç шкулĕнче ачасене вырăс чĕлхи вĕрентме пуçăнать. Университет пĕтерсен истори предметне те шанса параççĕ ăна.

Хавхаланса ĕçлет Анатолий. Çакна районта та асăрхаççĕ, райкома инструкторта ĕçлеме илеççĕ. Унтан Анатолий Васильевича Элпуçĕнчи «Мир» колхоза партком секретарьне суйлаççĕ. Кунта коммунистсен йышĕ самай пысăк пулнă. Вĕсен производствăри тата политикăри хастарлăхне ӳстерме сахал мар тимлет секретарь. Ăна ĕненеççĕ, шанаççĕ. Кĕçех «Мир» колхоз председателĕн тилхепине те шанса параççĕ. Колхозран совхоз туса хунă хыççăн кăна Анатолий Васильевич Элпуçĕнчи шкулта ĕçлеме тытăнать. Кунта та пултарулăхĕпе палăрать, завучра, ачасене воспитани парас ĕç организаторĕнче вăй хурать. Музей тăвассипе нумай ĕçлет. Тăхти музейне те йĕркелеççĕ, Шупашкартан Илья Тăхти сăртне те куçарса килеççĕ Элпуç шкулне. Çĕнçырма шкулĕ 100 çул тултарнă тĕле альбом хатĕрлеççĕ. Çак никĕс çинче шкул ачисене пĕлӳ парассине те вăйлатса пыраççĕ. Таисия Васильевна та пултарнă таран пулăшнă ĕнтĕ мăшăрне. Вăл ултă çул кĕçĕнрех Анатолий Васильевичран – 1942 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче çуралнă Çĕнçырма ялĕнче, пĕр ялтанах вĕсем, пĕр-пĕрне пĕлсе ӳснĕ. Ашшĕ, Василий Егорович Егоров, Тăван çĕршыва хӳтĕлеме вăрçа тухса кайнă та каялла таврăнайман, вăрçă хирĕнчех пуçне хунă. Çапла вара ашшĕне пĕрре те курайман вăл, унтан хырăмра юлнă. Амăшĕ, Елизавета Сергеевна Тимофеева, 1912 çулхи, колхозра вăй хунă. Ытти çамрăксем пекех, Таиç те ирех ĕçе кӳлĕннĕ. Шутлама пултаракан тĕплĕ хĕрача пулнă вăл: нумай пухăнмасан та, хăй ĕçлесе илнĕ укçапа шкула каймалăх кĕнеке, ручка, кăранташ тата ыттине туяннă. Çакă та питĕ интереслĕ: вăл мĕн ачаран учитель пулма ĕмĕтленнĕ. 1959 çулта вунă класс пĕтернĕ. Тăхăнмаллисем илес тесе пĕр çулталăк колхозра ĕçленĕ. Çакăн хыççăн тин ĕмĕтне пурнăçа кĕртме Канашри педагогика училищине вĕренме кайса кĕнĕ. Каламасăрах паллă: чунне парса тăрăшса вĕренет хĕр, хăйне ачасене тивĕçлĕ пĕлӳпе воспитани пама хатĕрлет. Училищĕне пĕтерсен, 1963 çулта ниçта та мар, тăван тăрăхне – Элпуç шкулне ачасене вĕрентме килет. Вăл вăхăтра шкул директорĕнче Николай Семенович Семенов ĕçленĕ, хăйĕн пултаруллă юратнă вĕренекенĕ пĕлӳ илсе тăван шкулне вĕрентме килнĕшĕн питĕ савăннă, ăна хапăл туса кĕтсе илнĕ. Чипер, сăпайлă, çамрăк учительницăна 1-мĕш класа вĕренме çӳрекенсем те тӳрех юратса пăрахнă, пурте ăна куçран тинкерсе пăхнă. Вулама, çырма, шутлама хăнăхтарнă вăл вĕсене. Лайăххишĕн пĕрле савăннă, пурне те пулăшма, тарăн пĕлӳ пама тăрăшнă. Ачасен пуласлăхĕ пуçламăш классенче мĕнле вĕреннинчен питĕ нумай килет-çке. Таисия Васильевна çакна лайăх пĕлнĕ, ачасемшĕн чунне панă. Çавăнпах пулĕ пĕрремĕш вĕрентекене ĕмĕр тăршшĕпе те манмаççĕ. 82-ре пырать халĕ Таисия Васильевна, апла пулин те хăй вĕрентнĕ ачасем паян кунччен те килсех çӳреççĕ ун патне, шăнкăравлаççĕ, уявсенче саламлаççĕ, вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх сунаççĕ. Пĕр улшăнмасăр 38 çул вăй хунă вăл ачасене пĕлӳпе воспитани парас тесе. Палăртсах калăпăр, çăмăл мар ĕçре. Килти хуçалăхри ĕçсене васкаса пуçтарса вăхăтра шкула çитме тăрăшнă, класа тулли кăмăлпа кĕнĕ, пурне те тарават пулнă, пурне те тарăн пĕлӳ парас тесе тимленĕ.

Обществăлла ĕçре те хастарлăхпа палăрса тăнă Таисия Васильевна, хăй вăхăтĕнче Çĕнçырма ялĕнчи хĕрарăмсен канашне ертсе пынă, ăна валли те вăхăт тупнă. Аставатăп, кашни юнкун ялти клуба пуçтарăнаттăмăр, унта пĕсерме, çыхма, тĕрлĕ алĕç тума вĕренеттĕмĕр. Йышлăн çӳреттĕмĕр хĕрарăмсен канашĕ йĕркелекен мероприятисене. Лекцисем итленĕ, уявсенче концерт-спектакльсем лартнă, тĕрлĕ шайри смотрсене хутшăннă, пĕрре кăна мар малти вырăнсене те йышăннă. Таисия Васильевнана хăйне Чăваш Республикин грамотипе те чысланăччĕ. Аса илӳ çăмхине сӳтсе, нумай ыррине куç умне кăларма пулать вăл вăхăтрине. Таисия Васильевнана мероприятисене йĕркелесе ирттерме мăшăрĕ Анатолий Васильевич та пулăшмасăр тăман, паллах. «Эпĕ хам та ăна ĕмĕр тăршшĕпех пулăшса пыма, кирлĕ пулсан хӳтĕлеме те тăрăшнă. Пĕр-пĕрне итлеме, ăнланма пултарнă эпир. Çын пурнăçне ăмсанман, кĕвĕçмен, усал сунман, ырă çеç тума тăрăшнă,– терĕ. – Пахчара халĕ те пĕрле ĕçлетпĕр, пĕрле каштăртататпăр, чăн та, ĕлĕкхинчен сахалрах – çулсем хăйсемех çапла хушаççĕ. Çапах та çу кунĕсенче пирĕн пушă вăхăт çук».

### Ачисемпе мăнукĕсем – çемье пуянлăхĕ

Утмăл çул ытла пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл пурăнакан Анатолий Васильевичпа Таисия Васильевна çинчен лайăххине нумай калама пулать, пĕтĕмпех çырса та пĕтереймĕн. Ĕçне, пурнăçне кура чысĕ. Вĕсем иккĕшĕ те хисеплĕ, паян кун та ят-сумлă ĕç ветеранĕсем, Таисия Васильевна, асăнтăмăр ĕнтĕ, 82-ре халĕ, Анатолий Васильевич – 88-та! Иккĕшĕ те педагог пулнă май, нумай ачана пурнăç çулĕ çине тăма пулăшнă вĕсем – пур професси çыннисем те пур вĕсем хушшинче. Хăйсем те виçĕ ача çуратса ӳстерсе вĕрентсе кăларнă, çемьелентернĕ. Аслă ывăлĕ Александр Анатольевич Шупашкарта тракторсем тăвакан заводра чĕрĕк ĕмĕр ĕçленĕ, тĕрлĕ специальноçа алла илнĕ. Шел, пурнăçран иртерех уйрăлса кайнă чире пула. Ачисенчен хĕрĕ коопераци техникумне хĕрлĕ диплома пĕтернĕ, ывăлĕ те техникумра вĕренет. Святослав Анатольевич строительство енĕпе пĕлӳ илнĕ. Вăл 1965-мĕш çулхи, Александртан икĕ çул кĕçĕнрех. Тăвайра, автовокзалпа юнашар лавкка тытать, халăха кил хуçалăхра кирлĕ таварсемпе тивĕçтерет. Çын пырсах çӳрет ку лавккана, апла пулсан, ассортимент туянмалăх, суйласа илмелĕх пур. Святославăн мăшăрĕ – Светлана Александровна. Çĕнçырма ялĕнчех пурăнаççĕ, хуçалăх тытаççĕ. Икĕ ывăл вĕсен – Игорь тата Артем. Игорь Канашра строительство енĕпе ĕçлет, терĕç. Чылай çул каялла Артем Святославович Тăвайра «Арча» магазин уçнă, унта суту-илӳ паян кун та калкал пырать. Халăх йышлă çӳрет асăннă лавккана. Апат-çимĕç, аш-какай, сĕт-çу çимĕçĕсем, çăкăр-булка таранах, сутаççĕ кунта. Кĕскен каласан, халăх таталмасть лавккран, пĕр туянса тухнă çĕре тепĕр иккĕн-виççĕн кĕрсех тăраççĕ. Канашра та тавар сутнине калаççĕ. Куратпăр, ашшĕн те, ывăлĕн те предпринимательлĕх шăнăрĕ пур, укçа-тенкĕ майне пĕлеççĕ. Çакă, ман шутпа, Анатолий Васильевичранах пырать. Унăн çак палăрăмсем сисĕнеççĕ.

Хĕрĕ, Лариса Анатольевна, Шупашкарта университетра аслă пĕлӳ илнĕ, математик, ашшĕ-амăшĕн çулĕпе кайнă. Вăл ыттисенчен чи кĕçĕнни, чылайранпа ĕнтĕ Элпуçĕнчи вăтам шкул директорĕнче тăрăшать. Шкул çĕнĕ, илемлĕ, хăтлă, ку чухнехи пурнăç ыйтнисене тивĕçтерет. Чи пĕлтерĕшли – шкулта ачасене тарăн пĕлӳ пе воспитани пама ăнтăлаççĕ. Кунта вĕренекенсем тĕрлĕ конкурссене, олимпиадăсене, спорт ăмăртăвĕсене хутшăнаççĕ, паллах, малти вырăнсене те çĕнсе илеççĕ, ӳсĕм çулĕпе пыраççĕ. Çакă вăл – вăхăт ыйтни. Шкул çумĕнчи садик те ку чухнехи пурнăç ыйтăвне тивĕçтерет, ачасен ашшĕ-амăшĕн кăмăлĕпе килĕшсе тăрать. 23 ача çӳрет хальхи вăхăтра садике, унта вĕсем пĕр-пĕрне хăнăхаççĕ, выляççĕ, аталанаççĕ. Апатне те ачасем валли шкул столовăйĕнчех пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Мĕн тери лайăх садик пурри унта çӳрекен шăпăрлансемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕшĕн.

Сăмах майăн каласан, Лариса Анатольевнан мăшăрĕ Владимир Кабаков та шкулта ĕçлет, вăл – ачасене турттаракан автобус водителĕ. Çĕнçырмапа Нӳшкассинче лавкка уçнă, хăйшĕн те, асăннă ялсенче пурăнакансемшĕн те меллĕ вĕсем пурри. Мăшăр икĕ ачине кун çути парнеленĕ. Вĕсем – Еленăпа Александр, иккĕшĕ те аслă пĕлӳ илнĕ. Хĕрĕ Канашра суту-илӳ точки уçнине те калаççĕ.

Кусем пурте – Анатолий Васильевичпа Таисия Васильевна ачисем тата мăнукĕсем: хальлĕхе пурĕ çичĕ мăнук вĕсен. «Ытларах вĕсемшĕн пурăнатпăр. Пĕтĕм юратăва, тимлĕхе ачасемпе мăнуксене паратпăр»,– пытармарĕ Таисия Васильевна. Пурăнакан пӳртçурчĕ лайăх аслă Васильевсен, урама тăрăхла вырнаçнă, ачисемпе мăнукĕсем маттур, малашлăха пурăнаççĕ – çаксем пурте вĕсен пысăк пуянлăхĕ. Апла-тăк, Васильевсем хăйсен пурнăçри тивĕçне туллин пурнăçланă.

**Мария СОРКИНА, Çĕнçырма ялĕ**
**Пичете Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

ЧУТЕЙ ШКУЛНЕ – 150 ÇУЛ

# Пĕлӳ çурчĕ – ăс-тăн çăлкуçĕ

**Чутей ялĕнче шкул уçăлнăранпа кăçалхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче 150 çул çитет, вăтам шкула сентябрь уйăхĕнче 40 çул пулчĕ.**

**Мĕн ĕмĕртенпех пĕлӳлĕх тĕнчи çине тăрса тăрăшакана, тарăн пĕлӳшĕн çунакана çивĕч ăс-тăн, иксĕлми вăй-хал парса тăрать. Паллă юбилей çывхарнă май, ĕмĕр çурă хушшинчи шкул аталанăвĕпе, историйĕпе паллаштарни вырăнлă пулĕ.**

Вĕрентекенсен, ачасен «иккĕмĕш» килне çак хушăра нумай çĕнни кĕнĕ: шкул сăн-сăпачĕ çĕнелсе илемленнĕ. Пĕлӳ сакки çинче пуçтарăннă тавракурăм пуянлăхĕ, ăс-тăн çивĕчлĕхĕ Чăваш Республикипе Раççей шайĕнче паллă çынсем кăларма май панă.

1863–1865 çулсенче прихутри пупсем хресчен ачисене вĕрентме уçнă шкул ĕçленĕ. 1865 çулта 13 ача вĕреннĕ.

1874 çулта Çутĕç министерстви кăларнă правилăпа килĕшӳллĕн ноябрĕн 22-мĕшĕнче Чутей ялĕнче Таса Кури тĕн тăванлăхĕн шкулне уçнă. Пĕрремĕш учитель кам пулни паллă мар. Шкул ĕçне пăхса тăраканĕ Хăрпаш шкулĕнче ĕçлекен Тимофей Иванов учитель шутланнă. Вăл таврари ытти шкулсене те пăхса тăнă. Раштав уйăхĕнче Çĕрпӳ уес училищине Чутей шкулĕ валли 8 шут, 10 аспид хăми, 12 кăранташ, чăвашла 12 букварь, 1 стопа хут, 4 тĕн кĕнеки ыйтса çыру янă.

«Тăванлăх» шкулĕнче ачасене Турă саккунне вулама, çырма, шутлама (арифметика) виçĕ çул хушши вĕрентнĕ. Шкула Çĕнĕ Ишпуç, Амалăх, хăш чухне Киччĕри хресчен ачисем те çӳренĕ. Вĕренекенсен йышĕ нумайланнă пирки хресченсенчен тара илнĕ çуртсенче, чиркӳ хурал пӳртĕнче те вĕрентнĕ. 1878 çулта 27 арçын ача, 3 хĕр ача вĕренме çӳренĕ. 1882 çулта 35 арçын ача, 3 хĕр ача шутланнă. Вĕренекенсенчен хăшĕсем хваттере кĕнĕ, класс пӳлĕмĕсенче çывăрнă. Шкул библиотекинче учитель валли 27, ачасем валли 590 кĕнеке пулнă. Ялти пуçламăш шкулсенче ĕçлекен учительсем 4–6 çул вĕреннĕ. Хусанти вĕрентӳ округĕ вĕсене пулăшу парассипе семинарсем ирттернĕ. 1882 çулхи июлĕн 15–31-мĕшĕсенче Çĕрпӳре вĕрентĕвĕн методика ыйтăвĕсемпе учительсем валли кĕске курс ĕçленĕ. Унта Хусан вĕрентӳ округĕн инспекторĕ И.Я.Яковлев та хутшăннă. 1881–1885 çулсенче учитель ятне илнĕ Григорий Александрович Кедров тăрăшнă.

1885 çулта Чутей шкулĕнче пуçласа Чĕмпĕрти тĕп чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă Степан Калистратович Калистратов учитель ĕçлеме тытăннă. Вăл 1896 çулченех ачасене вĕрентессипе вăй хунă, çулталăкра 144 тенкĕ шалу илнĕ. 1885–1886 вĕренӳ çулĕнче Чутейре 25 ача вĕреннĕ. Унта Амалăхран 6, Çĕнĕ Ишпуçĕнчен 1 ача çӳренĕ. 1915 çул тĕлне вĕренекенсен йышĕ 60 ачана çитнĕ, вĕсенчен 17-шĕ – хĕрачасем.

1917 çулхи авăн уйăхĕнчен Чутей земство училищин заведующийĕнче Лачкасси çынни Николай Прохорович Хаймуллин ĕçленĕ. Çак çул пĕрремĕш класа 74 ача пынă, вĕренӳ çулĕн вĕçĕнче ачасен шучĕ 110-на çитнĕ.

Малтанхи учительсем хушшинче – Степан Ефремович Ефремов





(1896–1901 ç.ç.), Алексей Михайлов (1901–1903 ç.ç.), Мария Ефремовна (1908–1912 ç.ç.), Евдокия Александровна Полетаева (Шипкова) (1912–1917 ç.ç.), Анастасия Васильевна Белкова (1917–1920 ç.ç.), Николай Алексеевич Масленников (1920–1921 ç.ç.), Павел Васильевич Васильев (1923–1941 ç.ç.).

1920 çулта Наркомпрос йышăнăвĕ тăрăх çĕнĕ вĕренӳ планĕпе 1 сыпăкри (1–4 классем) шкулта 4 çул, 2 сыпăкри (5–9 классем) шкулта 5 çул вĕренмелле тунă. Çав çул шкулта икĕ учитель ĕçленĕ, 108 ача вĕреннĕ.

1933–1934 вĕренӳ çулĕнчен пуçласа республикăра ачасене 7 çул вĕрентесси анлă сарăлать. Чутей ялĕнче те çак çул хресчен çамрăкĕсен шкулĕ уçăлнă. Ачасене Е.Г.Васильева, В.Л.Медведев, Н.П.Петров (Амалăх), М.М.Белкова (Амалăх), Г.Л.Леонтьев (Улянкă), А.И.Зобов (Тĕмер), Е.С.Чайкина, Н.П.Янбашев, В.М.Мулаков вĕрентме пуçланă.

1933 çулта Чутейре шкул ĕçне ертсе пыма Николай Петрович Янбашева çирĕплетеççĕ. 1934 çулта вăл 5 класлă шкул çурчĕ тутарать. Ачасене вĕрентес ĕçе апат çитерессишĕн шкул дирекцийĕпе вĕрентекенсем питĕ тăрăшнă. Колхоз шкул валли çĕр уйăрса панă. Шкулăн 2 лаша, 3 ĕне пулнă. Н.П.Янбашев ачасене вĕрентес, вĕсене воспитани парас ĕçре нумай вăй хунă. Вăл 1955 çулченех малтан учительре, каярах директорта ĕçлесе пенсие тухнă.

Тулли мар вăтам шкул йĕркеленнĕ хыççăн ачасен хисепĕ те палăрмаллах ӳснĕ. 1935–1936 вĕренӳ çулĕнче 311 ача шутланнă, 1935–1936 вĕренӳ çулĕнче 369 ачана çитнĕ, 13 учитель тăрăшнă. Класс-комплектсем пысăкланнă май учительсен хисепĕ те ӳснĕ. Тĕрлĕ çулсенче шкулта И.Г.Краснов, Я.И.Зверев, С.С.Зверева, Г.Е.Егоров, В.С.Семенов, Ф.А.Абрамова, Г.А.Шандаров, П.А.Андреев, А.Я.Яковлев, М.А.Журавлева ĕçленĕ.

1939–1940 вĕренӳ çулĕнче тулли мар вăтам шкулта 10 учитель, 279 вĕренекен пулнă.

1960 çултан шкул сакăр çул вĕренмелли программа çине куçать.

1947–1960 çулсенче ялти çичĕ çул вĕренмелли шкултан 313, 1961–1984 çулсенче сакăр çул вĕренмелли шкултан 601 вĕренекен тухнă.

1970 çулсенче техничкăсем ачасене вĕри апат çитерме тытăннă. Вĕсен тул çутăличченех тăрса, ачасем шкула киличчен кăмака хутса ăшăтмалла, урайсене çуса тасатмалла пулнă. Вăрмана вутă хатĕрлеме те хăйсенех кайма тивнĕ. Вуттине каснă, çурнă. Паллах, ачасем те яланах пулăшма хатĕр пулнă.

Шкулти учитель-ветерансем: П.В.Васильев, Е.Г.Васильева, М.А.Григорьева, С.Г.Григорьев, А.И.Иванова, В.П.Колотушкин, Р.П.Куракин, Н.П.Куракин, И.Т.Мигуськина, Е.П.Уездная, В.Е.Чайкин, Е.С.Чайкина, Н.Г.Богатырев, Д.И.Юркина, Н.М.Яклашкин, Е.И.Янбашева.

Тĕрлĕ çулсенче Чутей шкулĕнче директор пулса ĕçленĕ:

Н.П.Янбашев (1933–1940 ç.ç.), (1947–1955ç.ç.). И.А.Гладков (1940–1942 ç.ç.), А.А.Алексеева (IV-VIII – 1942 ç.ç.), Е.С.Чайкина (1942–1943 ç.ç.), Е.И.Иванов (1943–1944 ç.ç.), Р.П.Куракин (1944–1947 ç.ç.) (1968–1978 ç.ç), П.О.Мюресев (1955–1957 ç.ç.), Г.М.Спиридонов (1957–1960 ç.ç.), Н.П.Петров (1960–1964 ç.ç.), Н.М.Яклашкин (1964–1968 ç.ç.), Н.М.Шартов (1978–1979 ç.ç.), А.П.Григорьев (1979–1983 ç.ç.), Н.Н.Кузьмин (1983–1984 ç.ç.), Н.В.Большов (1984–2012 ç.ç., 2013–2015 ç.ç.), Л.В.Бельский (2013 ç.). 2015 çултанпа А.В.Гурина ертсе пырать коллектива.

Учитель профессийĕ – сумлă, пархатарлă. В.В.Юркина, В.Р.Андреева, Н.М.Александров, Е.В.Александрова, З.Н.Иванова, Г.С.Перлова, Л.Н.Афонова, Т.В.Емельянова, В.С.Куприянова, В.В.Шамбулин, Г.А.Филиппова, Г.М.Петрова, Е.К.Медведева, Е.Е.Николаева, А.Т.Сорокина, В.Я.Мишкина, Л.А.Михайлова чылай çул вăй хунă, хăшĕ-пĕри икшер ăру вĕрентсе кăларнă. Чутейри «пĕлӳ лаççинче» В.Н.Кучеров, Е.И.Шамбулина, Е.С.Шурдов, А.В.Васильев, Г.Н.Егорова, Н.П.Ширяев тата ыттисем чылай çул ĕçленĕ.

Тăван çĕршывшăн пуçĕсене хунă учитель-фронтовиксене, педагог пулма хатĕрленнĕ, анчах училищĕрен, институтран вĕренсе тухаймасăрах вăрçăра вилнĕ çамрăксене те чĕрере упрар: Ф.А.Андреев, П.А.Алексеев, Н.П.Петров, П.П.Горшков, И.П.Куракин, П.С.Куракин, А.И.Пиков, В.Л.Медведев, Г.В.Мулаков, Ф.И.Пиков, И.П.Рожков, И.Т.Тимофеев, Н.И.Юркин.

1984 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче Чутейре икĕ хутлă вăтам шкул уçăлсан унăн ертӳçи пулма Николай Васильевич Большова çирĕплетнĕ. Вăл директор тилхепине 30 çул çирĕппĕн тытса пынă.

1996 тата 1997 çулсенче шкул Пĕтĕм Раççейри конкурссенче лауреат ятне çĕнсе илнĕ, дипломсене тивĕçнĕ. Тăрăшуллă ертӳçĕне «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ», «Раççей халăх вĕрентĕвĕн отличникĕ» ятсемпе чысланă, халĕ те кунти ĕç-хĕлпе интересленсех тăрать педагог-ветеран.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.)





# Пĕлӳ çурчĕ – ăс-тăн çăлкуçĕ

Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 4-мĕш стр.

Чутейре шкул малашлăхĕшĕн «Кубнинский» совхозăн çамрăк та хастар директорĕ И.Я.Гурин нумай тăрăшнă. Вĕрентекенсем, ашшĕ-амăшĕ ăшă та сутă шкул парнеленĕшĕн халĕ те тав сăмахĕ калаççĕ ăна. Капмар шкула халĕ юнашарти Амалăх, Çĕнĕ Ишпуç ялĕсенчен вĕренме çӳреççĕ. Маларах кӳршĕллĕ Тутар Республикинчи Хучсан ялĕнчен те вĕреннĕ.



Иккĕмĕш ретре сулахайран виççĕмĕшĕ çĕршывĕпех паллă дирижер Морис Яклашкин пĕрле вĕреннĕ ачасем хушшинче

Паян ачасене лайăх вĕренме, учительсене вăй парса ĕçлеме условисем, çутă классем, пысăк спортзал, çĕнĕ оборудованипе тивĕçтернĕ столовăй, медицина, процедура кабинечĕсем, библиотека тата ытти те пур. Хальхи вăхăтра кашни кабинетрах компьютер, мультимедиапроекторсем, интернет çыхăнăвĕ пурри вĕренӳ пахалăхне ӳстерме пулăшать.

1984–2024 çулсенче 702 вĕренекен вăтам пĕлӳ илни çинчен аттестат илнĕ. Вĕренӳре пысăк çитĕнӳсем туса пынăшăн 62 ача ылтăн тата кĕмĕл медальсене тивĕçлĕ пулнă. Чылай ачана вĕренӳ тытăмĕн тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕсем парса чысланă. Çак хушăра виççĕре яхăн выпускник аслă пĕлӳ илнĕ.

2003 çулхи авăн уйăхĕнче шкулта реструктуризаци иртнĕ. Амалăхри, Çĕнĕ Ишпуçĕнчи тата Чутейри шкулсем пĕрлешсе «Чутейри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципаллă учреждени туса хунă. Ялсенчен ачасем малалла çурранах çӳренĕ, халĕ ятарлă автобус илсе çӳрет. В.А.Волков водитель акă мĕн каласа парать: «Ĕç стажĕ кивĕ шкултанах пуçланнă манăн. 40 çул пĕр улшăнмасăр вăй хуратăп. 2002 çулта шкула пĕрремĕш автобус килчĕ, юнашар ялсенчи Амалăхпа Ишпуçĕнчен ачасене турттарма пуçларăм. 2010 çулта шкула иккĕмĕш, 2019 çулта виççĕмĕш автобус çитрĕ. Тĕрлĕрен вăйă-конкурс, олимпиада, экзамен, спорт вăййи е ытти – ялапах хатĕр ачасемшĕн автобус. Туслă йышра ĕçлеме те кăмăллă».

2015 çултанпа коллектива А.В.Гурина ертсе пырать. Çак хушăра шкул сăн-сăпачĕ çулсерен тулашĕнчен те, шал енчен те палăрмаллах улшăнса пыни куçкĕрет.

Коллективри вĕрентекенсене илес пулсан, Наталья Сергеевна Куракина – аслă категориллĕ учитель. Вăл 2007 çулта «Пĕтĕм Раççейри чи лайăх учитель» конкурсра Президент премине тивĕçнĕ. 2010 çулта ЧР Президенчĕн грантне çĕнсе илнĕ. Н.Куракина – Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă «Путеводитель по русскому языку. Сложные предложения с разными видами связи» методика пособийĕн авторĕ. «Мой открытый урок» ятлă методика альманахĕн проект авторĕ тата ертӳçи вăл. Ку сборникре районти вĕрентекенсен, вĕренекенсен творчество ĕçĕсем, уçă уроксен тĕслĕхĕсем пичетленнĕ.

Нина Калистратовна Филиппова 2021 çулта шкул ачисен Пĕтĕм тĕнчери олимпиадинче çĕнтерӳçĕ хатĕрленĕшĕн ЧР Президенчĕн грантне илнĕ. 2023 çулта ăна чăваш халăхĕн культура пуянлăхне упрас, сарас тата аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Чăваш наци конгресĕн Хисеп грамотипе чысланă. Юлашки çулсенче Мальвина Козлова (пĕтĕм тĕнчери, чăваш чĕлхипе литературипе регионсем хушшинчи çĕнтерӳçĕ-стипендиат), Ксения Шамбулина, Виктория Краснова, Михаил Малов, Никита Орлов, Мария Воробьева, Анастасия Козлова – регион шайĕнчи çĕнтерӳçĕсем. Вĕренекенсем çулсерен Раççей, республика, округ шайĕнче ирттерекен предметсен олимпиадисенче кăна мар, юрă-ташă, спорт ăмăртăвĕсенче, тĕрлĕ конкурсcенче малти вырăнсене тухса шкул чысне çӳле çĕклеççĕ.

И.М.Васильев, А.Т.Сорокина, А.Н.Орлова, Л.Г.Краснова, В.А.Иванова, Г.М.Петрова вĕрентекенсене Чăваш Республикинчи Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотипе чысланă. В.Р.Андреева, Т.В.Емельянова «Аслă учитель» ята илме тивĕçлĕ пулнă.

Шкулта аслă категориллĕ учительсен шучĕ ӳссех пырать: Н.С.Куракина, Л.Н.Афонова, И.М.Васильев, А.В.Гурина, С.П.Куракина, Н.К.Филиппова. Раççей Федерацийĕн вĕренӳ сферинчи хисеплĕ ĕçченĕсем: вырăс чĕлхипе литература вĕрентекен Н.С.Куракина, 47 çул химипе биологи вĕрентнĕ Л.Н.Афонова, А.В.Гурина директор, чăваш чĕлхипе литературине, КРК вĕрентекен Н.К.Филиппова, М.М.Петрова педагог-ветеран. Физикăпа математика учителĕ З.В.Цветкова Раççей Федерацийĕн грамотине тивĕçнĕ.

Чутей шкулĕнчи ытти ĕçченсем те ăшă сăмахсене тивĕçлĕ. Столовăйĕнче повартра нумай çул вăй хунă Л.С.Беловапа, ăна пулăшаканĕ пулнă Л.В.Антоновапа, завхозра ĕçленĕ Н.Е.Журавлева, Л.Н.Михайлова, Е.И.Шерне, Л.А.Яклашкина тирпейлӳçĕсене, медсестрара тăрăшнă Л.С.Тимофеевана тав сăмахĕ калатпăр.

Сутă та таса столовăйĕнче хальхи вăхăтра тутлă та техĕмлĕ апат пĕçерекен Е.Н.Бараматова поварпа ăна пулăшакан А.Ю.Иванова вăй хураççĕ. Çавăн пекех лаборант, завхоз тата ытти ĕçсене пурнăçласа пыракан, 40 çула яхăн ĕç стажĕллĕ В.С.Куракина, Р.Г.Гаврилова медсестра, хурал ĕçченĕсем – В.И.Уездный, В.С.Шамбулин, В.В.Куприяновпа Ю.А.Куракин газооператорсем, Л.Г.Шамбулина, С.Н.Юркина, Т.П.Мулакова тирпейлӳçĕсем ырă сăмахсене тивĕçлĕ. Н.С.Емельянов хуралçăра нумай çул ĕçленĕ.

Чутейре вĕренсе тухнă ял çыннисем социаллă пурнăçпа экономикăн тĕрлĕ сферинче тăрăшса тăван шкул ятне мухтава кăлараççĕ. Чылайăшĕ вĕсенчен пирĕн хушăра çук пулсан та, ячĕ-сумĕпе халăх асĕнчех. Н.М.Яклашкин – «Чутейпе Çĕнĕ Ишпуç», «Тăвай енĕн сумлă çыннисем» виçĕ кĕнеке авторĕ, Чутей ялĕн хисеплĕ гражданинĕ, ЧР хисеплĕ тавраплĕçи. Улми йывăççинчен аякка ӳкмен. Республикăра унăн ывăлне, Чăваш патшалăх симфони капеллин дирижерне М.Н.Яклашкина пĕлмен çын çук та пулĕ? Морис Николаевич – Чăваш патшалăх университечĕн искусство факультечĕн деканĕ, профессор, педагог, Раççей Федерацийĕн халăх артисчĕ, РФ тата ЧР патшалăх премийĕн лауреачĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн «За заслуги перед Чувашской Республикой», Туслăх орденĕсемпе наградăланă. Шупашкар хулин тата Чутей ялĕн хисеплĕ гражданинĕ вăл.

В.С.Шерне – профессор, ăслăлăх кандидачĕ.

В.С.Григорьев – истори наукисен докторĕ, истори кафедрин профессорĕ, историк, педагог.

В.В.Архипова (Яклашкина) – ЧР тава тивĕçлĕ врачĕ.

Çак списока тăсса, пултаруллисене малалла асăнар-ха: А.Л.Мигуськина – ЧАССР тава тивĕçлĕ артисткки; В.К.Мясников – ЧАССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ; Н.И.Сидоров – РСФСР тава тивĕçлĕ механизаторĕ; Н.Н.Назаров – СССР велосипед спорчĕн мастерĕ; Н.Т.Шамбулин – ЧАССР тава тивĕçĕ агрономĕ; В.В.Чайкин – Тăвай райадминистраци пуçлăхĕн çумĕ; В.А.Чайкин – РФ хисеплĕ энергетикĕ; В.Р.Куракин – майор, летчик-инструктор; В.Р.Куракин – ЧР ШĔМ пуçлăхĕн çумĕ, подполковник; В.П.Куракин – Госпожнадзор инспекторĕ; Вениамин И.Титов – Ульяновск облаçĕнчи вăрман хӳтĕлев центрĕн директорĕ, летчик-сăнавçă; Валерий И.Титов – ЧР тата РФ тава тивĕçлĕ энергетикĕ; У.И.Титова, И.В.Ядранская (Юркина), И.В.Власова (Белова), Л.П.Гурина – РФ вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕсем; Г.А.Зайцева, Е.В.Куприянова – ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем; З.Н.Иванова – Чутей ял хастарĕ, хисеплĕ тавраплĕçĕ, «Ял ĕçченĕ» хаçатăн активлă обществăлла корреспонденчĕ, «Они сражались за Родину», «Энциклопедия Янтиковского района» кĕнекесене пухма хутшăннă; А.Г.Титова – Тăвайри архив ĕçĕсен заведующийĕ; Н.В.Чайкина – ЧР тава тивĕçлĕ врачĕ; Л.Л.Шерне – ЧР тава тивĕçлĕ механизаторĕ; А.В.Шамбулина – Мускаври «Школа перспектива» телестуди ертӳçи; С.Л.Бараматова (Иванова) – хăвăрт утассипе ЧР чемпионĕ, СССР спорт мастерĕ; В.В.Яклашкин – Раççей ПФ Чăваш Енри управленийĕнчи ертӳçĕ çумĕ; Д.В.Баталов – Раççей паралимп вăййисен спорт мастерĕ; В.И.Кузнецов – «Аль» ФСК тренер-преподавателĕ; Г.П.Куклов – Тăвайри ВКХ подразделенийĕн начальникĕ; Л.С.Бараматов – Чутей тата Тăрмăш чиркĕвĕсен настоятелĕ; Э.В.Кириллов – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, «Уяв» ушкăнĕн концертмейстерĕ... Çак списокăн вĕçĕ-хĕрри те çук.

Пирĕн тăнăç пурнăçшăн вăрçă хирĕнче нимĕçсене хирĕç çапăçса пуçĕсене хунă, халĕ Украина çĕрĕ çинче паттăрла кĕрешсе орден-медальсене тивĕçнĕ салтаксене ĕмĕр асра тытăпăр.

Пурнăçран уйрăлса кайнă 20 çулхи каччă Сергей Витальевич Алексеев (ун ячĕпе шкулта Герой партти уçнă), 40 çулсенчи Николай Николаевич Мулаков пирĕн асăмăрта ĕмĕрех упранĕç. Пирĕн шкултан вĕренсе тухнă, Афган, Чечен вăрçисенче В.Андреев, С.Куприянов «Паттăрлăхшăн», Суворов, Е.Цветков «1999-2009 çулсенче контртеррорла операцие хутшăннăшăн», В.Яклашкин «Çапăçури хастарлăхшăн», Ю.Белов «За ратную доблесть» медальсене тивĕçнĕ.

Шкулăн кун-çулĕ вăрăм, унăн вĕренекенĕсен ăраскалĕсем те тĕрлĕрен...

Ялсенче шкулсем пурри пурнăç чĕрĕлĕхне, пуласлăх пуррине кăтартаççĕ. Акă, шкул юбилейĕ умĕн ачасемпе çамрăксен «Движение первых» юхăмĕн Чутей шкулĕн активисчĕсем пĕтĕм Раççейри конкурсĕн-че çĕнтерсе, 200 пин тенкĕ премине тивĕçнĕ.

Ачасен шучĕ сахалланса пырать пулин те, шкул сукмакне çухатас марччĕ.

**Людмила МИХАЙЛОВА,**
**Чутей шкулĕ**

## ДЕМОГРАФИ

# Туйсем ытларах пулнă

**Чӳк уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне Тăвай округĕнче 44 ача – 29 арçын ачапа 15 хĕрача – кун çути курнă. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 12 ача сахалтарах. Нумай ачаллă çемьесене пиллĕкмĕш тата улттăмĕш пепкесем хушăнни савăнтарать. Вилекенсен йышĕ умĕнхи çулхинчен ытларах, 175 çын (2023 çулта – 160) пурнăçран уйрăлнă.**

18 çемьерен (пĕлтĕр – 23) суд йышăнăвĕпе 17 мăшăр уйрăлнă. Пĕр çемье 42 çул пурăннă хыççăн арканнă. Кăçалхи 10 уйăхра 21 çемье чăмăртаннă, пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне 18 туй пулнă.

Январь-октябрь уйăхĕсенче ЗАГС пайĕнче 272 гражданла акта регистрациленĕ, юридици пĕлтерĕшлĕ 1369 справка панă.

## ТĂВАЙ ЕН: КУН ХЫÇÇĂН КУН

# СВО паттăрĕ ячĕпе асăну турнирĕ

**Тушкилти спортзалра «Паттăрлăх» орден кавалерне Николай Сергеевич Никифорова асăнса волейбол турнирĕ иртнĕ. 2007 çулта çуралнă тата унран кĕçĕнреххисен 6 команди хутшăннă.**

Турнир çĕнтерӳçисен йышĕнче Çĕнĕ Шупашкарсем – пĕрремĕш, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Канаш муниципалитет округĕпе Тушкил ялĕн командисем йышăннă.

«Вăрçă паттăрĕсене асăнса малашне те ăмăртусем ирттерĕпĕр. Николай пек паттăр салтаксен тĕслĕхĕ çамрăксене хăюллă, вăйлă пулма хавхалантарать,– терĕ Тушкил территори уйрăмĕн пуçлăхĕ Александр Трофимов.– Ялти спортсменсен вăйă ăсталăхĕ ӳссе пыни савăнтарать, малалла та тренировкăсене тăтăш хутшăнма сĕнес килет вĕсене».

# Наградăна аппăшне панă

**Ятарлă çар операцийĕнче паттăрлăх кăтартнăшăн Тушкилти Владимир Алексеева «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă. Çакăн çинчен РФ Президенчĕ кăçалхи апрелĕн 25-мĕшĕнче алă пуснă.**

Владимир Николаевич мотострелковăй çар тытăмĕнче неонацистсене хирĕç кĕрешсе пуç хунă. Вилнĕ хыççăн ăна «Паттăрлăх» орденĕпе наградăланă.

Çак кунсенче «Паттăрлăхшăн» медале унăн аппăшне округ администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, çар комиссарĕ Евгений Семенов панă.

# Паспорт илнĕ

**Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ умĕн Тăвай округĕнчи 10 çамрăка Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспортне панă.**

Шкул ачисем Тăван çĕршыва чунтан парăнса ĕçлеме, Раççей интересĕсене, хăрушсăрлăхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлеме сăмах панă. Вĕсене округри тĕрлĕ ĕç тытăмĕн представителĕсем Ирина Михайлова, Валентина Новикова, Ирина Хайдукова, Татьяна Иванова, ашшĕ-амăшĕ саламланă.

# Сиплĕ чей – сывлăхшăн

**Йăнтăрчăри культура ĕçченĕсем сиплĕ курăксенчен чей хатĕрлесси пирки каласнă. Информаци сехечĕ усăллă иртнĕ.**

Хамăр тăрăхри улăх-çаранта, вăрманта мĕн тĕрли ӳсмест-ши? Шăм-шак курăкĕ, сар çип ути, пĕтнĕк тата ытти усăллă ӳсен-тăрансемпе паллашнă çамрăксем.

Халăх пĕрлĕхĕн кунĕнче «Туслă ачасем» ăс-тăнпа вăйă программи хатĕрленĕ. Пĕрлĕхре – вăй, туслă пулни палăртнă тĕллевсене пурнăçа кĕртме пулăшни çинчен пĕтĕмлетӳ тунă.

**Хыпарсене Раиса ШУМОВА хатĕрленĕ**

ЭПИР ПĔРЛЕ!

# Чăн-чăн патриотсем

**Амалăх ялĕнчи волонтерсем те ятарлă çар операцийĕнчи салтаксем валли маскировка тетелĕ çыхассинчен айккинче тăмаççĕ. «Вĕсем çар çыннисене кăна мар, техникăна хӳтĕлеме те питĕ кирлĕ»,– терĕç ырă ĕçшĕн вăй-хала шеллемен хастарсем. Юпа уйăхĕнчен пуçласа халăх пĕрлĕхĕн кунĕччен 8 сетка çыхса пĕтернĕ.**



Пĕчĕк йышпа пулсан та чун-чĕре хĕрӳлĕхĕпе ĕç ӳсĕнет. Надежда Иванова клуб ĕçченĕ, Валентина Колотушкина, Эльвира Орлова, Лидия Иванова, Зинаида Тарасова, Валентина Краснова тата Елена Владык пирки чăн-чăн патриотсем тесе калас килет.

«Тыл çирĕп пулсан пирĕн салтаксем те вăйлă»,– тесе ĕçе малалла тăсрĕç вĕсем.

**Людмила ИВАНОВА**

ТИМЛĔХ ЫЙТАТЬ

# Чутей юманĕ те илĕрттĕр

**Муркаш округĕнчи Ильинкăри мăнаçлă юман пирки çĕршывĕпех пĕлеççĕ. «Чĕрĕ çут çанталăк палăкĕн» статусĕ пур унăн, наци реестрне кĕртнĕ. Чăваш Енри вată юман Раççей йывăççисен конкурсĕнче малти вырăнсене йышăннă. Кăçал экологи çулталăкĕ пулнă май та, Чутей ялĕ çывăхĕнчи вăрманти ватă юман ӳсекен вырăна шкулти лагерьте каннă вĕренекенсемпе экскурсие кайни тата йывăçа пăхса тăмалли çинчен хаçатăн общество корреспонденчĕсем Зинаида Ивановапа Людмила Михайлова пĕлтерниччĕ, сăмах хускатнăччĕ.**

Кăçалхи авăн уйăхĕнче ĕçтешсемпе çав ватă юмана шыраса тупрăмăр. Курсан тĕлĕнсе каймалла! 300 çул урлă каçнă пулсан та мĕн тери хăватлă вăл! Ялтан инçех мар ӳсет. Такам та кайса курма пултарать. Çывăхри хырлăхра кăрăç (рыжик) пухса савăнтăмăр. Пирĕн тăрăхра çакăн пек паттăр йывăç сыхланса юлнипе мăнаçланмалла. Ăна лайăх условисенче ӳсме майсем туса памалла. Ятарлă приборсемпе виçине палăртмалла, чирлесрен сăнаса тăмалла. Миçе çултине çырса çапмалла. Тахçан кунта карта та тытса çавăрнă пулас. Вăл çĕрĕшсе пĕтнĕ, çĕнетмелле. Çут çанталăка юратакансем, туристсем туртăнччăр пирĕн тăрăха. Тăвай енри çак илĕртӳллĕ вырăн çамрăксене çут çанталăкпа çывăх пулма, унăн пуянлăхĕшĕн, ырлăхĕшĕн тăрăшма витĕм кӳтĕр. Акă, Чутейри «Кубинская» сыр хатĕрлекен цехра иртнĕ уйăхра Канаш хулинчи шкул ачисем пулнă. Татьяна Юркина сыр тăвас ăсталăхпа паллаштарнă, ачасем хăйсем те мастер-класра хутшăннă çак ĕçе. Паха продукци валли чĕртаварпа тивĕçтерекен сĕт-çу фермине пулнă. Экскурси вăхăтĕнче çак ялта ӳсекен ватă юманпа паллашма та хирĕç пулас çукчĕ ĕнтĕ вĕсем.

**Раиса ВАСИЛЬЕВА**



ВĂРÇĂ АЧИСЕМ

# Ĕç ветеранне саламланă

**Эпир, Тăрмăш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Н.Матросов, ялти ветерансен канашĕн ертӳçи Е.Н.Матросова, хĕрарăмсен совечĕн председателĕ Т.В.Ялугина, ĕç ветеранĕ тата вăрçă ачи В.А.Дмитриева Улянкă ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Тăрмăшра пурăнакан Любовь Ивановнана 91 çулхи черетлĕ çуралнă кунĕ ячĕпе саламларăмăр, пурнăçра пĕтĕм ыррине сунса юрă-кĕвĕ те парнелерĕмĕр.**



Вăл 1933 çулхи юпа уйăхĕнче кун çути курнă. Паллах, ашшĕ-амăшĕн юратнă хĕр пĕрчийĕ пулнă. Вĕсем çителĕклĕ те лайăх пурăннă. Анчах кам шутлама пултарнă тепĕр 8 çултан хаяр вăрçă тухасса? Ашшĕне повестка панă хыççăн, амăшĕ 4 ачипе тăрса юлнă. Паянхи пек астăвать Люба аппа амăшĕ татăлса йĕнине, ашшĕн кусĕсенчен куççуль юхнине. Мĕнле-ха манăн çаксене. Çăмăл пулман вăрçă ачин ачалăхĕ: выçлăхĕ те, сивви те пулнă. «Уя çĕрĕк паранкă пуçтарма кайсан, лашапа хăвалатчĕç»,– куççуль витĕр куç умне кăларчĕ иртнĕ кунсене Любовь Иванова. Темĕн те курнă, чăтнă, вăй çитнĕ таран амăшне пулăшнă. Шкула кайма та тумтирĕ пулман, унтанкунтан саплан㠸 ипаласемпех çӳренĕ, никам та кулман, йĕкĕлтемен. Темле йывăр пулсан та, пĕр-пĕрне пулăшма тăрăшнă.

Ашшĕ вăрçăран таврăнайман, амăшĕ ачисене пĕччененех ӳстерсе çитĕнтернĕ, вĕрентсе кăларса çын тунă. Тавах Турра, вĕсем юратнă ĕçĕсенче вырăн тупнă, çемьеленнĕ, пĕр-пĕрне манман, кирлĕ вăхăтра пулăшсах тăнă.

Любовь Ивановна шкул хыççăн Шупашкарта повара вĕренсе тухнă. Тăрмăш ялĕнчи маттур каччăпа Николай Ивановпа юратса çемье çавăрнă, ялтах пурăнма юлнă. Кил-çуртне хăпартнă, хуралтисене çĕнетнĕ. Мăшăрĕ колхозра тракторпа ĕçленĕ. Паллах, механизатор ĕçĕ çăмăл мар, уйрăмах ака-суха, вырма тапхăрĕсенче. Ĕçрен килнĕ çĕре килте яланах вĕри апат, çăвăнма ăшă шыв хатĕр пулнă. Хăй Тăвайри «Юность» кафере поварта ĕçленĕ. Ирех тăрса ĕçе çитмелле пулнă. Ун чухне хальхи пек çăмăл машинăсем пулман, автобусĕ те яланах пĕр пек çӳремен. Çавăнпа çуран чылай утнă. Хĕрĕх çула яхăн унăн ĕçри стажĕ.

«Пĕр кун та ĕçрен юлман, вăхăтра çитмесен апатне кам пĕçерет тесе шутлаттăм?», – тет Люба аппа. Чăнах та, çав тери тутлăччĕ кафери апат Любовь Ивановна ĕçленĕ чухне. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн сăнĕ Хисеп хăми çинче çакăнса тăнă. Хастар ĕçчене парнесемпе Тав хучĕсем парса чысланă. Район совечĕн депутачĕ те пулма тивĕçлĕ пулнă. Тивĕçлĕ канăва та «Юность» каференех тухнă сатур хĕрарăм. Килте ларма пултарайман вăл, пенсире пулсан та юратнă ĕçĕпе часах уйрăлайман. Шел те, мăшăрĕ 70 çула çитсен уйрăлса кайнă ку тĕнчерен, пĕччененех тăрса юлнă Люба аппа. Ача амăшĕ пулайманшăн та кулянать вăл, упăшки службăра авиацинче пулнă, аварине те лекнĕ. «Ача усрама илес килетчĕ, анчах та мăшăр килĕшмерĕ»,– тесе пăшăрханса каласа пачĕ. Аппăшне йывăр килнине Белоруçре пурăннă Миша шăллĕ пĕлнĕ. Вăл çар çынни. Пенсие тухнă пулнă тата арăмĕ чирлесе вилнĕ. Ачисем ӳснĕ, кашниех хăй çемйипе пурăнать. Паллах, тăван тăрăх та туртнă ĕнтĕ Мишăна, Тăрмăш ялне аппăшĕ патне курма килнĕ те пурăнсах кайнă. Ялта сывлăшĕ те уçă, лăпкă, кил хуçлăхра та ĕçлесе пулăшмалла тăванне. Питĕ савăннă Люба аппа шăллĕ килнĕшĕн. Михаил Иванович 88 çитсе нумаях пулмасть пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Халĕ пĕччененех пурăнать ĕç ветеранĕ. Кӳршисем лайăх, кирлĕ чухне пулăшаççĕ ăна. Люба аппа чиркӳне çӳрет, çывăх тăванĕсемшĕн кĕлĕ вуласа чунне пусарать. Чиркӳ тунă чухне ĕçлеме те, тасатма та çӳренĕ, ӳркенсе тăман. Чиркӳрен каялла килнĕ чухне лавккана кĕрсе мĕн кирлине туянать. Больници те хирĕçех. Кирлĕ пулсан, юн пусăмне кĕрсе виçтерме пулать. Тата урамри çулсене чултан сарнăшăн та хĕпĕртет Любовь Ивановна. Ял хăтлăхĕшĕн тăрăшнăшăн, хăйне çуралнă кунпа киле килсех саламланăшăн уйрăмах ял тăрăхĕн пуçлăхне Алексей Николаевича тав турĕ. Пире те ырлăх-сывлăх сунчĕ, хăйĕн пек нумай çул пурăнма пил пачĕ.

«90 çултан иртсен, кашни çулах юбилей пек»,– терĕ кăмăлтан Любовь Ивановна. Вăл – ялти типтерлĕ те хисеплĕ çын. «Сывлăху ан иксĕлтĕр нихăçан, пурăнса çитсемĕр çĕр çулччен»,– тесе уйрăлтăмăр вăрçă ачинчен.

**Елена МАТРОСОВА,**
**Тăрмăшри ветерансен**
**совечĕн ертӳçи**

ШУХĂШЛАР-ХА ПУÇ ТАВРА

# Эрех водительшĕн тус мар



**Чăваш Енре октябрĕн 18–20- мĕшĕсенче иртнĕ «Ӳсĕр водитель» рейд пирки вуласа пĕлтĕм те тĕлĕнтĕм: çул-йĕр инспекторĕсем виçĕ кунра эрех ĕçнĕ 61 водителе тытса чарнă тата вĕсем тĕлĕшпе протокол çырнă. Мĕнле-ха вăл эрех сыпнă е ĕçнĕ хыççăн машина рулĕ умне лармалла?**

Хальхи пурнăçра çул çинче ахаль те вĕçе-вĕçĕн тенĕ пек машина чупать, тимлесе ĕлкĕрмесен, инкекĕ юнашарах темелле. Ĕçнĕ çын кăткăс лару-тăрура мĕнле пулмаллине çийĕнчех ăнкарса илмесĕр те пултарать. Кирек епле пулсан та малта хăрушсăрлăх тăмалла вĕт-ха. Пурнăçра вăли-шали пулнипе малалла каяймăн, пурте çын шăпипе çыхăннă. Кайран «чавса çывăх та çыртма çук» тесе татăлса кулянмалла ан пултăр. Çавăнпа черккене ӳпĕнтериччен малтан мĕн пулса тухма пултарасси пирки шутламалла. Эсĕ çул çине руль умне ларса тухакан машина вун-вун лаша вăйĕллĕ транспорт хатĕрĕ – çакăн пирки самант та манмалла мар. Тата çакă та сыхлăха ӳстерме хистет: çул çине эрех ĕçсе тухнă 61 водительтен 40-шĕ – унччен правасăр хăварнисем иккен. Апла пулсан вĕсем хăйсен айăпне вуçех туймаççĕ курăнать, нимĕнле пĕтĕмлетӳ тума таваскамаççĕ, çине-çине йĕркене пăсаççĕ. Ку вăл йĕркесĕрлĕх кăна мар, çул çинче хушма хăрушлăх кăларса тăратма тата пысăк инкек патне çитерме пултаракан пысăк çитменлĕх, преступлени сĕмлĕ ĕç.

**Иван ГЛАДКОВ**

## Номерсем курăнмасан

Ятарлă хатĕрсемпе номере хупланă автомобильпе çула тухсан, праваран 1–1,5 çуллăх хăтарма пултараççĕ. Тата асăннă хатĕрсене туртса илес йыйту тухса тăрать.

# 11 - 17 ноября 2024 г. ТЕЛЕПРОГРАММА

## Понедельник, 11

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 14.00, 17.00, 18.30 «Информационный канал» 16+
13.30 «АнтиФейк» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «МОСГАЗ. ДЕЛО №10: МЕТРОНОМ» 16+
23.00 «Большая игра» 16+
0.00 Д/с «БРИКС. Горизонты будущего: Эфиопия» 12+
1.00, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 18.30 «60 Минут» 12+
13.00 «Наши» 12+
14.30, 21.10 Вести. Местное время
14.55, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.30 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «ОВЧАРКА» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

4.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
8.25, 10.35 Т/с «ПЁС» 16+
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «КОМИТЕТ» 16+
22.15, 0.00 Т/с «СКОРАЯ ПОМОЩЬ» 16+
1.55 Т/с «БАЛАБОЛ» 16+
4.20 Т/с «АГЕНТСТВО СКРЫТЫХ КАМЕР» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00 «Моя любовь — Россия!» Документальный цикл 12+
5.30 «Рассекреченная история» Документальный цикл 16+
6.00 «Варшавская мелодия» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
8.00 «Мультимир» 6+
9.30 «Ывăлсем» Илемлĕ фильм 12+
12.00 «Смешарики 2D» 6+
13.00, 15.00 «Пирĕн хыпарсем» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
13.05, 14.10, 0.30 Х/ф «ПРОСТИТЬ НЕЛЬЗЯ РАССТАТЬСЯ» 12+
14.00, 16.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
14.05 «Без молока» 12+
15.05 «Сесиль в стране чудес» 12+
16.05, 2.30 «Его Величество Орган» 12+
17.30 «Супер мяу» 6+
18.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
18.10 «Мой дедушка был вишней» 12+
19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
19.30, 23.30 «Эх, юррăм янăра» 12+
20.30 «Чăваш театрĕн ывăлĕ» 12+
21.30 «Пĕрремĕш утăмсем» Юмах 12+
4.00 «Маша и медведь» Анимационный сериал 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
14.30-14.55 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Вторник, 12

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 14.00, 17.00, 18.30 «Информационный канал» 16+
13.30 «АнтиФейк» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «МОСГАЗ. ДЕЛО №10: МЕТРОНОМ» 16+
23.00 «Большая игра» 16+
0.00 Д/с «БРИКС. Горизонты будущего: Египет» 12+
1.00, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 18.30 «60 Минут» 12+
13.00 «Наши» 12+
14.30, 21.10 Вести. Местное время
14.55, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.30 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «ОВЧАРКА» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

4.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
8.25, 10.35 Т/с «ПЁС» 16+
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «КОМИТЕТ» 16+
22.15, 0.00 Т/с «СКОРАЯ ПОМОЩЬ» 16+
1.55 Т/с «БАЛАБОЛ» 16+
4.20 Т/с «АГЕНТСТВО СКРЫТЫХ КАМЕР» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30 «Эх, юррăм янăра» 12+
6.00, 8.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
6.10, 18.10 «Мой дедушка был вишней» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
9.30 «Чăваш театрĕн ывăлĕ» 12+
10.30 «Пĕрремĕш утăмсем» Юмах 12+
12.00 М/ф «Пин-код» 6+
13.00, 15.00 «Пирĕн хыпарсем» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
13.05, 14.05, 0.30 Х/ф «ПРОСТИТЬ НЕЛЬЗЯ РАССТАТЬСЯ» 12+
14.00, 16.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
15.05 «Сесиль в стране чудес» 12+
16.05, 2.30 «Шурăм пуçĕ кунта лăпкă...» 12+
19.30, 23.30 «Литература тĕпелĕ» 12+
20.30 «Хĕллехи юмах» Виктор Шамбулинăн концерчĕ 12+
4.30 «Супер мяу» 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
14.30-14.55 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Среда, 13

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 14.00, 17.00, 18.30 «Информационный канал» 16+
13.30 «АнтиФейк» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «МОСГАЗ. ДЕЛО №10: МЕТРОНОМ» 16+
23.00 «Большая игра» 16+
0.00, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 18.30 «60 Минут» 12+
13.00 «Наши» 12+
14.30, 21.10 Вести. Местное время
14.55, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.30 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «ОВЧАРКА» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

4.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
8.25, 10.35 Т/с «ПЁС» 16+
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «КОМИТЕТ» 16+
22.15, 0.00 Т/с «СКОРАЯ ПОМОЩЬ» 16+
0.55 Российская национальная телевизионная премия «ТЭФИ-KIDS-2024» 0+
2.15 Т/с «БАЛАБОЛ» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30 «Литература тĕпелĕ» 12+
6.00, 8.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
6.10 «Мой дедушка был вишней» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
9.30 «Хĕллехи юмах» Виктор Шамбулинăн концерчĕ 12+
12.00 «Маша и медведь» Анимационный сериал 0+
13.00, 15.00 «Пирĕн хыпарсем» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
13.05, 14.05, 0.30 Х/ф «ПРОСТИТЬ НЕЛЬЗЯ РАССТАТЬСЯ» 12+
14.00, 16.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
15.05 «Сесиль в стране чудес» 12+
16.05, 2.30 «Тăм тивнĕ чечексем» Çамрăксен театрĕн спектаклĕ 12+
17.45 М/ф «Пин-код» 6+
18.10 «Человек рассеянный» 12+
18.30 «Формула счастливого детства» 12+
19.30, 23.30 «Тĕплĕ калаçу» 12+
20.30 «Тăвансем, сире савса. А. Лукина» 12+
4.00 «Супер мяу» 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
14.30-14.55 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Четверг, 14

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 14.00, 17.00, 18.30 «Информационный канал» 16+
13.30 «АнтиФейк» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «МОСГАЗ. ДЕЛО №10: МЕТРОНОМ» 16+
23.00 «Большая игра» 16+
0.10, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 18.30 «60 Минут» 12+
13.00 «Наши» 12+
14.30, 21.10 Вести. Местное время
14.55, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.30 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «ОВЧАРКА» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

4.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
8.25, 10.35 Т/с «ПЁС» 16+
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «КОМИТЕТ» 16+
22.15, 0.00 Т/с «СКОРАЯ ПОМОЩЬ» 16+
0.55 «Поздняков» 16+
1.05 «Мы и наука. Наука и мы» 12+
2.05 Т/с «БАЛАБОЛ» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30 «Тĕплĕ калаçу» 12+
6.00, 8.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
6.10, 18.10 «Человек рассеянный» 12+
6.30 «Формула счастливого детства» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
9.30 «Белые мелодии» Концерт симфонической капеллы 12+
12.00 «Супер мяу» 6+
13.00, 15.00 «Пирĕн хыпарсем» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
13.05, 14.05, 0.30 Х/ф «ПРОСТИТЬ НЕЛЬЗЯ РАССТАТЬСЯ» 12+
14.00, 16.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
15.05 «Страшно. Интересно» Документальный цикл 12+
16.05, 2.30 «Çăлтăрсем ăййа тухсан» 12+
18.30 «Путь к себе» 12+
19.30, 23.30 «Национальные театры-наше богатство» 12+
20.30 «Чувашский соловей» Концерт, посвященный творчеству Тамары Чумаковой 12+
4.10 «Маша и медведь» Анимационный сериал 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
14.30-14.55 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Пятница, 15

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 14.00, 17.00 «Информационный канал» 16+
13.30 «АнтиФейк» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
18.40 «Человек и закон» 16+
19.45 «Поле чудес» 16+
21.00 Время
21.45 «Голос. Дети» 0+
23.30 Д/п «30 лет вместе. Последний герой» 12+
1.20 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 18.30 «60 Минут» 12+
13.00 «Наши» 12+
14.30, 21.10 Вести. Местное время
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.30 «Прямой эфир» 16+
21.30 «Ну-ка, все вместе!» 12+
0.15 «Истории Большой Страны» 12+
1.15 Х/ф «СЕМЬЯ МАНЬЯКА БЕЛЯЕВА» 16+

### НТВ

4.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.25 Д/с «Мои университеты. Будущее за настоящим» 6+
9.25, 10.35 Т/с «ПЁС» 16+
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «ДНК» 16+
17.55 «Жди меня» 12+
20.00 Т/с «СКОРАЯ ПОМОЩЬ» 16+
0.20 «Своя правда» 16+
2.15 «Квартирный вопрос» 0+
3.05 Т/с «БАЛАБОЛ» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30 «Национальные театры-наше богатство» 12+
6.00, 8.00, 18.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
6.10, 18.10 «Человек рассеянный» 12+
6.30 «Путь к себе» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
9.30 «Чувашский соловей» Концерт, посвященный творчеству Тамары Чумаковой 12+
12.00 М/ф «Пин-код» 6+
13.00, 15.00 «Пирĕн хыпарсем» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
13.05, 14.05, 0.30 Х/ф «БЕЗ МЕНДЕЛЬСОНА» 12+
14.00, 16.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
15.05 «Страшно. Интересно» Документальный цикл 12+
16.05, 2.30 «Юратсан юрлас килет» Камит 12+
18.40 «Тур по Чувашии» 12+
19.00 «Эрне» Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
20.30 «Чĕререн тухакан сăмахсем» Алёна Силпи концерчĕ 12+
23.30 «Кил ăшши» 12+
4.45 «Маша и медведь» Анимационный сериал 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
14.30-14.55 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Суббота, 16

6.00 «Доброе утро. Суббота» 0+
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря» 0+
10.00, 12.00, 18.00 Новости
10.15 Д/ф «Джуна. Дар как наказание» 12+
11.05 «Играем свадьбу!» 12+
12.15 «Поехали!» 12+
13.10 «Наше всё» 12+
14.00 «ПроУют» 0+
14.50 Д/ф «Анатолий Добрынин. Самый главный посол» 12+
15.45 Горячий лед» Фигурное катание. «Гран-при России 2024» Этап IV 0+
16.55 «Кто хочет стать миллионером?» 12+
18.20 Детектив «Родня» 12+
19.50 «Эксклюзив» 16+
21.00 Время
21.35 Х/ф «АДМИРАЛЪ» 16+
23.55 Х/ф «УТРАЧЕННЫЕ ИЛЛЮЗИИ» 18+
2.50 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России. Суббота»
8.00 Местное время. Суббота
8.35 «По секрету всему свету»
9.00 «Формула еды» 12+
9.25 «Пятеро на одного»
10.10 «Сто к одному»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 «Доктор Мясников» 12+
12.55 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» 12+
14.30, 20.50 Вести. Местное время
14.50 «Юмор! Юмор! Юмор!!!» 16+
17.50 «Привет, Андрей!» 12+
21.00 Большой юбилейный концерт Игоря Крутого 12+
0.50 Х/ф «ПРОСТИ ЗА ЛЮБОВЬ» 12+
4.25 Х/ф «ПОЦЕЛУЕВ МОСТ» 12+

### НТВ

4.40 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
6.20 «Жди меня» 12+
7.20 «Смотр» 0+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «Поедем, поедим!» 16+
9.20 «Едим дома» 0+
10.20 «Главная дорога» 16+
11.00 «Живая еда» 12+
12.00 «Квартирный вопрос» 0+
13.00 «Попутчик» 16+
14.15 «Секрет на миллион» 16+
16.20 «ЧП. Расследование» 16+
17.00 «Своя игра» 0+
18.00 «Следствие вели...» 16+
19.00 «Центральное телевидение» 16+
20.20 «Ты не поверишь!» 16+
21.25 Международный телевизионный конкурс детской авторской песни «Наше поколение-2024» 0+
0.00 «Международная пилорама» 16+
0.50 «Захар Прилепин. Уроки русского» 12+
1.20 «Квартирник НТВ у Маргулиса» 16+
2.40 «Дачный ответ» 0+
3.30 Т/с «БАЛАБОЛ» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00 «Эрне» Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
6.00, 8.00 «Республика» Информационная программа 12+
6.10 «Человек рассеянный» 12+
6.40 «Тур по Чувашии» 12+
7.00 Д/ф «Судьба длинною в век» 12+
8.30 «Чĕререн тухакан сăмахсем» Алёна Силпи концерчĕ 12+
11.00 «Авланатăп эпĕ, авланатăп» Камит 12+
13.30 «Мухтавлă çынсем. Мишши Сеспель» 12+
14.45 «Çĕнĕ тĕлпулу – çĕнĕ юрăсем» Иванпа Ирина Шинжаевсен концерчĕ 12+
17.30 «Мультимир» 6+
18.00 «Наталья Яклашкина и Вечная весна» 12+
19.00 «Ырă кăмăлпа» 12+
20.30 «Асамат эрешĕсем» Светлана Асаматăн пултарулăх каçĕ 12+
23.30 «Çатан карти çинче» 12+
1.45 Х/ф «ОТЕЛЬ «ТОЛЕДО» 12+
4.45 «Супер мяу» 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

8.00-8.15 Местное время. Суббота.
8.20-8.35 Местное время. Суббота. Вести. Интервью (чув)
14.30-14.50 Местное время. Вести-Чувашия
20.50-21.00 Местное время. Вести-Чувашия

## Воскресенье, 17

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Подкаст.Лаб 16+
6.50 «Играй, гармонь любимая!» 12+
7.35 «Часовой» 12+
8.05 «Здоровье» 16+
9.10 «Непутевые заметки» 12+
9.30 «Мечталлион» 12+
10.15 «Жизнь других» 12+
11.05 «Повара на колесах» 12+
12.15 «Видели видео?» 0+
13.20 Т/с «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
15.30 «Горячий лед. Фигурное катание. Гран-при России» Этап IV 0+
17.00 Д/ф «Джуна. Дар как наказание» 12+
19.00 «Точь-в-Точь» 16+
21.00 Время
23.00 Д/п «30 лет вместе. Что? Где? Когда?» 12+
0.10 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

6.40 М/ф «Смотрим М/ф»
7.20 «В кругу друзей»
10.00 Местное время. Воскресенье
8.35 «Когда все дома»
9.25 «Утренняя почта»
10.10 «Сто к одному»
11.00, 14.00, 17.00 Вести
11.30 «Большие перемены»
12.30 «Истории Большой Страны» 12+
13.25 Т/с «ФАНТАЗЁР» 12+
14.30 Вести. Местное время
15.00 «Парад юмора» 16+
17.50 «Песни от всей души» 12+
20.00 Вести недели
22.30 «Москва. Кремль. Путин.»
23.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+
1.40 Д/ф «Адмирал Колчак. Жизнь и смерть за Россию» 12+

### НТВ

5.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
6.30 «Центральное телевидение» 16+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «У нас выигрывают!» 12+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.00 «НашПотребНадзор» 16+
14.05 «Однажды...» 16+
15.00 «Своя игра» 0+
16.20 «Человек в праве» 16+
17.00 «Следствие вели...» 16+
18.00 «Новые русские сенсации» 16+
19.00 Итоги недели
20.20 Шоу «Аватар» 12+
23.05 «Звезды сошлись» 16+
0.40 «Основано на реальных событиях» 16+
3.50 Т/с «БАЛАБОЛ» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00 «Чем пластинка черней, тем ее доиграть невозможней» 12+
6.00 «Наталья Яклашкина и Вечная весна» 12+
7.00 «Кушар» Спектакль 12+
9.00 «Эрне» Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
10.00 «Ырă кăмăлпа» 12+
11.30 «Асамат эрешĕсем» Светлана Асаматăн пултарулăх каçĕ 12+
14.30 Х/ф «ИНÇЕТ ТЕЛЕЙ ÇУТИ» 12+
17.00 М/ф «Фиксики новенькие» 6+
18.00 «Королевство потерянных языков» 12+
19.00 «Священная роща чувашского кинематографа» 12+
20.00 «Любовь творит чудеса» Концерт Раисы Казаковой 12+
23.00 «Праски кинеми мăнукне авлантарать» Камит-мюзикл 12+
1.30 Х/ф «КЛЕТКА ДЛЯ СВЕРЧКА» 12+
4.30 М/ф «Пин-код» 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

8.00-8.15 Местное время. Воскресенье. Вести-ПФО
8.20-8.35 Местное время. Воскресенье.
14.30-15.00 Местное время. Вести-Чувашия

## Ăшшăн саламлатпăр



Хаклăран та хаклă, юратнă аннене, асаннене, кукамая, тăхлача, Киччĕ ялĕнче пурăнакан **Ольга Васильевна Репейкинана** сумлă юбилейĕпе чун-чĕререн, ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç ыррипе киленсе, чĕре савăнăçне туйса тулли пурнăçпа пурăнма сунатпăр.

Вăл «1 Мая» колхозри уй-хир ĕçĕсенче, фермăра тăрăшса пенсие тухнă. Халĕ 70 çулта пулсан та «Кубнинский» ЯХПКра арманта тырă авăртнă çĕрте вăй хурать. Çулĕсене кура мар харсăр. Аллисем пур ĕçре те çыпăçуллă, тĕрлет, çыхать, тутлă пĕçерет. Эпир, 4 ачи, хамăрăн аннене телейлĕ çитĕнтернĕшĕн, тĕнчене юрăхлă пулма пилленĕшĕн, пурнăçра хамăр вырăна тупма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Ялан хаваслă та ырă, чунпа çамрăк пул. Чирчĕр мĕнне пĕлмесĕр, тăван кил ăшшине упраса нумай-нумай çул пурăнмалла пултăр. Ачусен тата мăнукусен пархатарне ĕмĕр-ĕмĕр курса хавхаланса пурăн эсĕ.

Анне, аннемĕр! Сăмахпа кăна сан умри парăма татма та çук, паллах. Эсĕ пирĕншĕн – çутă хĕвел. Эс çумра пулнипе эпир телейлĕ.

Ăшă чун, ырă кăмăл санра
Çăлкуç шывĕ пекех иксĕлмест.
Тĕнчере эс пурришĕн Турра
Тав тумашкăн сăмах та çитмест.
Мĕн тери хаваслă кун,
Сан паян çуралнă кун.
Чи илемлĕ, чи хĕвеллĕ,
Чи юратнă, чаплă кун.

Егорпа Нил мăнукĕсем те маттур асаннекукамайпа пĕр уйăхра çуралнă. Вĕсене те çутă малашлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Ăшă салампа: икĕ хĕрĕ, икĕ ывăлĕ, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, 9 мăнукĕ, тăхлачисем, çывăх тăванĕсем** 1258

Хисеплĕ ĕç ветеранне, Тăвайра пурăнакан **Валерий Георгиевич Мюресова** 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Кун-çул сукмакĕпе хастаррăн та мал ĕмĕтлĕн утма хурçă пек çирĕп сывлăх, çăлкуç таппиллĕ иксĕлми вăй-хал, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Вăл хурал тытăмĕнче тăрăшнă. Ĕç çине яваплă пăхнипе палăрса тăнă. Мăшăрĕ обществăлла апатланура ĕçлесе канăва тухнă. Иккĕшĕ те сăпайлă, ырă чун-чĕреллĕ çынсем вĕсем. Килте сирĕн ялан юратупа ăнланулăх хуçаланччăр. Мĕн ĕмĕтленнисем çитсе пыччăр, çумра яланах çывăх çынсем пулччăр.

**«Тăвайри кооператив» потребобщество**




### Памятные даты истории РОССИИ

**10 ноября** - День сотрудника органов внутренних дел РФ (День полиции)
**12 ноября** - День специалиста по безопасности
**13 ноября** - День войск радиационной, химической и биологической защиты

## Пушар ан алхастăр

**Çулталăк пуçланнăранпа Чăваш Республикинче 1217 пушар регистрациленĕ, çулăмра пурĕ 46 çын пурнăçĕ татăлнă, 61 çын сиенленнĕ.**




Тăвай енре паянхи кунччен 15 пушар тухнă. Юлашкинчен Чутей ялĕнче çӳп-çап купи çуннă.

Раççей МЧСĕн Чăваш Енри Тĕп управленийĕн ĕçченĕсем пурне те вут-кăвартан тимлĕ пулма сĕнеççĕ. Тĕтĕм мăкăрланнине асăрхасан «01», «101» тата «112» номерсемпе шăнкăравласа пĕлтермелле.

**Николай ПАВЛОВ**


### ПĔЛТЕРӲСЕМ

1073 ТЕПЛИЦЫ. Т. 8-9871294822 12-9

0694 КУП. коз, овец, бычков. Т. 8-9278508564 25-17

1191 ПРОДАЮ поросят. Дост. Т. 8-9278560135 6-3

0217 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Т. 8-9876617161 35-26

1030 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9279985488. Володя. 11-11

1283 Ремонт холодильников и стиральных машин. Т. 8-9279955504 3-1

1000 Требуются разнорабочие в Москву. З/п от 100 тыс. р. Т. 8-9373882555 22-13

1279 Вахта 20 смен, Казань. Требуются грузчики и комплектовщицы на склад. 4000 руб. смена. Проживание, питание бесплатно. Отправка с. Янтиково бесплатно. Т. 8-9053456785

1257 КАЧАКА сутатăп. Т. 8-9063804496

1263 8 уйăхри пăру сутап. Т. 8-9278681780

1249 ПРОДАЮ 1 комн. квартиру в г. Чебоксары. Т. 8-9603055723

1228 ОБУЧЕНИЕ и прием на работу мастером по обрезке копыт КРС. Т. 8-9603011135 3-2

0990 КУПЛЮ бычков, коров, телок, вынужд. забой. Дорого. Т. 8-9370160057 20-13

1274 ОКНА ПВХ под ключ от производ. за кор. сроки. Замер. Гарантия. Скидки. Монтаж по ГОСТу Т. 8-9603031551 8-1

1187 Закупаем молочных ягнят, козлят от 2-3 месяцев, а так же молочных телят от 1-2 месяцев Т. 8-9093033504 8-9953423107 5-3


**В целях улучшения сельской инфраструктуры жители Алдиаровского территориального отдела Янтиковского муниципального округа Чувашской Республики инициировали следующие проекты для участия в конкурсном отборе инициативных проектов для реализации на территории муниципальных округов Чувашской Республики, которые могут быть реализованы в 2025 году при прохождении конкурсного отбора, уполномоченным органом по организации и проведению которого является Министерство сельского хозяйства Чувашской Республики:**

1. Поставка одежды, сцены для Дома культуры в д. Уразкасы.
2. Ремонт внутреннего электроосвещения здания МАОУ "Алдиаровская СОШ" .
3. Ремонт водоснабжения по ул. О. Кошевого в д. Беляево.
4. Ремонт грунтовой дороги по ул. Кооперативная в д. Уразкасы.
5. Ремонт грунтовой дороги от дома номер 36 до дома номер 38 по ул. Пушкина в д. Беляево.
6. Ремонт грунтовой дороги от дома номер 40 до дома номер 25 по ул. Пушкина в д. Беляево.
7. Ремонт сцены, читального зала и тамбура в Уразкасинском Доме культуры.
8. Текущий ремонт инженерных сетей теплоснабжения в тепловом узле МАОУ "Алдиаровская СОШ" .
9. Устройство водоснабжения и водоотведения Нюшкасинского Дома культуры.
10. Устройство контейнерных площадок для сбора бытовых отходов на территории кладбищ Алдиаровского территориального отдела.
11. Устройство памятника воинам ВОВ в д. Уразкасы.
12. Устройство памятной стены воинам ВОВ в с. Алдиарово.

Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕ Йăнтăрчăра çуралса ӳснĕ, Тăвай ялĕнче пурăннă

**Алексей Евмениевич**
**ХАЙДУКОВ**

ятарлă çар операцийĕнче паттăрла пуç хунă пирки амăшĕпе, мăшăрĕпе, ачисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Тав тăватпăр

Калама çук йывăр хуйхă килсе çапрĕ пирĕн çемьесене. Эпир хамăрăн чи çывăх çыннăмăра – юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçине, шăллăма, пиччене, Çĕнĕ Пуянкасси ялĕнче пурăннă **Виталий Николаевич Сергеева** ĕмĕрлĕхех çухатрăмăр. Январь уйăхĕнче 70 çул тултармаллаччĕ. Хăй вăхăтĕнче вăл тĕрлĕ çĕрте ĕçленĕ: электрикра та, Агропромбанк филиалĕнче хуралçăра та, Мускав хулине те ĕçлеме çӳренĕ. Пур çĕрте те хăйĕн тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа, тĕплĕ пурнăçланă. Пур çынна та пулăшма васкатчĕ. Ачисене вĕрентсе кăларма сахал мар тăрăшнă, мăнукĕсене чунтан юрататчĕ. Ăнсăртран аманса больницăна лексе унтан киле тухаймарĕ. Çак йывăр вăхăтра пирĕншĕн чун тĕрекĕ пулнă, хаклă çыннăмăра юлашки çула чысласа ăсатма пулăшнă, пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланă тăвансене, кӳршĕсене, ратне çыннисене, хăта-тăхлачăсене, ял-йыша, кум-кумасене, унăн тата хамăрăн юлташсене, Нăрваш чиркĕвĕн настоятельне Георгий аттене, шкул учителĕсене, çавăн пекех Виталий Николаевича юлашки çула ăсатма пынă мĕнпур çынна çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Вăрăм ĕмĕрлĕ, телейлĕ пулăр, хуйхă-суйхă сирĕнтен айккине иртчĕр. Пурнăçра лайăххи кăна пултăр. Турă пулăшса пытăр, упраса тăтăр сире пурне те.

**Мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, йăмăкĕсем, пиччĕшĕсем тата вĕсен çемйисем** 1281

Выражаем глубокое соболезнование в связи со скоропостижной смертью

**ИЕРОНОВА**
**Сергея Яковлевича,**

проживавшего в селе Янтиково.

**Жена Ангелина Николаевна, дети, внуки, племянники, сестры и братья.** 1282

Çĕнĕ Пуянкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ математика учителĕнче ĕçленĕ Зоя Павловна Сергеевван мăшăрĕ

**Виталий Николаевич**
**СЕРГЕЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


"Ял ĕçченĕ" ("Сельский труженик")

Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.

Пичете панă 07.11.2024 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй Р.В.ШУМОВА

Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаçата районти "Ял ĕçченĕ" хаçат редакцийĕнче наборласа версткăланă, "Чăваш Ен" ИПК" АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт. Çырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1445. Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru